Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ДЕКАБĔР 10 ШăМАТКУН 282(5095) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухат. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Цер №-рĕ 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—7—67, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—0—86, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Совет интеллигенцине бољшевисăмпа хĕçпăшаллантарар

ПСК(б)П Тĕпкомĕ партилĕ пропагандă ĕçне йĕркелесси çинчен йышăннă постановлени совет интеллигенцийĕн социалисăм строительствинчи ролĕне питĕ тĕплĕн кăтартса панă:

„Пĕр государствă та хăйĕн интеллигенцийĕсĕр пурăнма пултараймасть, пултараймасть те, рабочисемпе хресченсен социалисăмла государстви пушшех те хăйĕн интеллигенцийĕсĕр пурăнма пултараймасть. Совет влаçĕн çулĕсенче ÿссе çитĕннĕ пирĕн интеллигенци государствă аппарачĕн кадрĕсенчен тăрать, вĕсем пулăшнипе рабочи клас хăйĕн шалти тата тулти политикине тытса пырать“.

Социалисăм çĕршывĕнчи рабочисемпе хресченсем пăхса çитĕнтернĕ совет интеллигенци хăйĕн массипеле пачах çĕнĕ интеллигенци. Вăл кивĕ интеллигенци пек капиталисăмшăн мар, социалисăмшăн ĕçлет.

Совет çĕршывĕнчи аслă шкулсем халĕ ĕнтĕ рабочисемпе колхозниксенчĕн тата вĕсен ывăл-хĕрĕсенчен çулсерен темиçе 100-шер пин специалис вĕрентсе кăларасçĕ. „Рабочи класĕн културăлă-техникăлă пĕлĕвне инженерла-техникла работниксен пĕлĕвне çити хăпартас“ (Сталин) задачă халĕ ĕнтĕ никамшăн та темĕнле тума çук ĕç пек туйăнмасть, ку задачă пирĕн çĕршывра йăнăçлăн пурнăçа кĕрсе пырать. Ĕç—пĕтĕм совет халăхĕ интеллигентлă пулассипатнеле пырать. Станок умĕнчи ĕнерхи стахановец—паян савăт директорĕ, ĕнерхи комбайнер — паян МТС директорĕ, ĕнерхи уй-хир бригадирĕ—паян йалхуçалăх институчĕн студенчĕ—кашни рабочи, колхозник културă, пĕлÿ, аслăлăх йеннеле туртăнать.

Парти Тĕпкомĕ совет государствинче интеллигенцин ролĕ мĕн пек пысăккине кăтартса парса, хамăр интеллигенци çине йĕрĕнсе пăхасси халĕ те пĕтменнине палăртать. „Совет интеллигенцийĕ çине çакăн пек бољшевисăмла хирĕçле пăхни тискер, хулиганла тата совет государствишĕн хăрушă ĕç пулать“ тенĕ Тĕпком постановленинче.

Интеллигенцы хушшинчи, хамăр кадрсем хушшинчи политикăлă ĕçе йапăхтарни ĕнтĕ, партин политикăлă влийанине тулашĕнче пулса тăнă тата идейăлă писĕхÿсĕр йулнă пирĕн кадрсенчĕн пĕр пайне политикă йенĕпе пăрăнса, ăташса кайасси патне. Йутçĕршыв разведкисемпе вĕсен троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла агентурин аллине кĕрсе ÿкесси патне илсе пынă.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн постановленийĕ интеллигенци çине çакнашкал „махăйĕвла“, Ленина хирĕçле пăхассине пĕтерме кушать.

Совет интеллигенцине марксисла-ленинла воспитани пани кирлĕ.

Чăваш республик столицинче—Шупашкар интеллигенцийĕн декабĕрĕн 8-мĕшĕнче пулса иртнĕ пухăвĕнче, республикăри чи ватă медицинă работникĕсенчен пĕри Обухăв йулташ парти Тĕпкомĕ кăларнă „Парти Историйĕн Кĕске курсне“ ырăпса хĕрÿлĕ сăмах каларĕ:

— Кашни совет гражданинĕ социалисăмшăн хастаррăн кĕрешекен çын пулмала. Анчах кĕрешÿри çыннăн хĕçпăшалĕ мăка пулсан, вăл вара кĕрешÿ çынни мар. Парти пире çивĕчĕ те вăйлă хĕçпăшал „Парти Историне“ пачĕ. Çак хĕçпăшала пирĕн алла илмеле, вара пирĕншĕн нимĕнле йăвăрлăх та, нимĕнле тăшмансем те хăрушă мар, епĕр вĕсене çĕнтеретпĕр.

Обухăв йулташ пухури пĕтĕм интеллигентсен шухăшне каласа пачĕ. Марксисăм-ленинисăм хĕçпăшалне алла илесси—ĕçлесе тупмалли йапала. Пирĕн совет çĕршывĕнче марксисла-ленинла теорине алла илме пур майсем те пур, çав майсене тивĕçлипе йĕркелесе, вĕсемпе тĕрĕс усă курни кирлĕ.

Çине тăрса, бољшевикла тимлĕхпе тытăнса ĕçлесен, епĕр хамăр кадрсем теорире кайа йулнине пĕтеретпĕр. Кун çинчен пирĕн совет халăхĕ „ПСК(б)П Историн Кĕске курсне“ тата парти Тĕпкомĕ пропагандă ĕçне йĕркелесси çинчен йышăннă постановленине мĕнле пысăк хавасланпа кĕтсе илни те уçăмлăн каласа парать. Ĕçсынисем çак историлĕ документсене тулли кăмăлпа ырлаççĕ. Нумайăшсем, уйрăмах интеллигенци хушшинчен, парти историне хăйсем тĕллĕн тĕплĕн вĕренме тытăннă.

Парторганизацисем хаљхи вăхăтра кружоксен хисепне чакарса, вĕсене парти Тĕпкомĕн решенине çирĕп пăхăнса организацилес тата харпăрхăй тĕллĕн вĕренессине йĕркелес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Анчах çапах та организацилĕ ĕç сÿрĕкрехххĕн пырать. Уйрăмах интеллигенци ваљљи миçе тата мĕнле кружоксем тăвас, вĕсем ваљљи пропагандиссем суйласа çирĕплетес, интеллигенцине харпăрхăй тĕллĕн вĕренме условисем туса парас ĕçе кайарах тăварса пыраççĕ. Сăмахран, пайанхи куна çитсе Шупашкар хулинчи интеллигенци (врачсемпе учительсем) ваљљи пĕтĕмпе те икĕ лекци çеç иртернĕ. Районсенче, йалсенче ĕç тата начартарах тăрать.

ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ ку задачăна питĕ пысăк вырăна хурса, çапла кăтартса парать:

„Парти организацисен пропагандă йенĕпе тăракан пирвайхи черетри тата тĕп задачă тесе—партире тăракан тата партире тăман интеллигенци теорипе политикă тĕлĕшĕнчен кайа йулнине пĕтересси пулать тесе шутлас, совет интеллигенцине бољшевисăма вĕренсе алла илес, ПСК(б)П историне тата марксисăм-ленинисăм класикĕсен произведенисене вĕренеç ĕçре пур майсемпе те пулăшса пымала“.

Кăна парторганизацисен тĕрĕс ăнланса, бољшевикла пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешмеле.

Шупашкарти интеллигенцин пухăвĕнче тухса калакансем йалти интеллигенцине пулăшас ыйту лартрĕç. Ку—питех те лайăх шухăш. Хулари аслă шкулсенче ĕçлекен ăслăлăх работникĕсем, преподавательсем районсене, йалсене тухса лекцисем иртерме пултараççĕ. Чăн та, хулари врачсем, учительсем йалти врачсемпе учительсене пулăшса пырсан, епĕр пысăк ĕç тума пултаратпăр. Йалти условисене илсен, кунта хулари пек, лекцисем иртерме, консуљтацисем илме, кирлĕ вăхăтра кирлĕ литературă тупма майсем çукрах-ха. Çавăнпа та хулари интеллигенцин йалти интеллигенцине пулăшас ыйтăва çивĕччĕн лартмала, ку пулăшăва йĕркелемеле.

Аслă шкулсенче ĕçлекенсен профеççилĕ союзĕ ăслăлăх работникĕсем ваљљи Шупашкарта марксисла-ленинла каçхи университет организацилерĕ. Университетра 4 заљати пулса иртнĕ, заљатисенче лайăх хатĕрленĕ лекцисем пулаççĕ. Анчах пуçару Университет ĕçне малала тата лайăхрах йĕркелемеле. Кунашкал шкулсем районсемпе йалсенче те тума пулать. Пирĕн чылай ватам шкулсенче учительсен пысăк та çирĕп коллективĕсем ĕçлеççĕ, — аслă шкул пĕтернĕ учительсем хушшинчен лекторсем тупма пулать, вĕсене тупмалах.

Парторганизацисем пирĕн совет интеллигенцине марксисăм-ленинисăм теорине алла илме куллен тимлĕн пулăшса пымала. Çапла тума чĕнет парти Тĕпкомĕ, çапла тума чĕнет халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ.

Пирĕн интеллигенци марксисăм-ленинисăм теорине хăй вĕреннĕ вăхăтрах, çак теорин никĕсĕсене пĕтĕм ĕçсынисене ăнлантарса парас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемеле.

Общĕствăлă аталанăвăн саккунĕсене çутатса паракан марксисăм-ленинисăм теорине вĕренсе алла илсе пырса, пирĕн кадрсем, чăн-чăнах никам çĕнтерейми пулса тăрĕç, çак теори йалавĕ айне тăрса, Ленин—Сталин парти йертсе пынипе пĕтĕм совет халăхне коммунисăм çĕнтерĕвĕ патне тата ăнăçлăрах илсе пырĕç.

Францири рабочи класа хирĕçле репреççисем

Франци пичечĕ пĕлтерет: Францин çурçĕр пайĕнче 15 пин металлис халь те забастовкă тăваççĕ. Анзенри çĕркăмрăк районĕнчи горњаксем хушшинче хускану питĕ те вăйлă пулни палăрать. Предприйатисен администрацийĕ забастовкăна хутшăннăшăн пысăк çемйелĕ нумай рабочисене ĕçрен кăларнă. Чăннипе илсен, забастовкăна хутшăннăшăн тени вăл—малта пыракан, ытларах активлă рабочисене хирĕç киревсĕр ĕç тумалли сăлтав çеç пулса тăрать.

Лионра забастовкăна хутшăннăшăн айăпласа темиçе рабочине тăватшар уйăхлăха тĕрмене хупмала тунă.

Забастовкăра пулнă рабочисем пирки çакăн пек пригăвăр йышăнни пур рабочисене те пит хытă çиллентерсе тарăхтарать.

(ТАСС).

Массăлăн террор сарса йанă

Чехословакин Венгри пусмăрласа йышăннă районсенчен çапла пĕлтереççĕ: унта фашисăма хирĕç тăракан çынсене хирĕçле массăлăн террор сарса йанă. Комарно хулинче компартин икĕ активисне вĕлермелле суд тунă. Рожнавăра компартипе социал-демократла организаци членĕсем пулнă рабочисене 60 çынна арĕсленĕ. Фашиссем рабочисемпе служăшчисене ĕçрен массăлăн кăлараççĕ. Пĕр Кошицăра кăна 3.000 çынна ĕçрен кăларнă.

(ТАСС).

ТАСС пĕлтерни

Пулă тытас ĕçсем пирки Йапонипе калаçнисем çинчен

Совет Союзĕпе Йапони хушшинче пулă тытас ĕçри конвенци çинчен пыракан калаçусем çинчен пĕлтерсе, Йапонири хăшпĕр хаçатсемпе агентствăсем Совет правительствин çак ыйтури позицине пăсса кăтартма хăтланаççĕ. Çакна курв, ТАСС-а, кăçалхи ноябĕрĕн 25-мĕшĕнче Йут çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Литвинăв йулташ Иапони посолне г. Тогона каласа пĕлтернине пичетлесе кăларма хушнă.

Есĕр, г. посол, тенĕ Литвинăв йулташ, пулă тытас ĕçри конвенци çинчен сăмах тапратсан, йаланах Портсмутри договăр çине кăтарса параттăр. Есĕр çак обстойательствăна асран йараттăр пулас.

1. Портсмутри договăрăн 11-ш статйин тĕрĕс шухăшĕ тăрăх, ĕлĕк пулнă Российă империн правительстви „Йапони поддăннăйĕсене вырăс çĕресен çыранĕсем хĕррисенче Йапонски, Охотски тата Берингово тинĕсĕсенче пулă тытмашкăн права пама Йапонипе килĕшÿ тума“ хăй çине обйазательствă илнĕ. Уççăнах курăнса тăрать, çакăнтан ĕнтĕ Йапони поддăннăйĕсене пулă тытма мĕн чухлĕ участкăсем парасси пирки те, вăл участкăсене мĕнле условисемпе тара парасси пирки те нимĕнле обйазательствăсем те туса тăмаççĕ, вăл та тата тепри те икĕ йенĕ пĕр-пĕринпе кăмăлтан килĕшсе тумалли йапала пулса тăрать.

Çакнашкал килĕшÿсене тунă чухне кашни йенĕ те пĕр йенĕ хăйĕн обйазательствисене мĕн тăран пурнăçа кĕртсе пынине, çавăн пекех тата вĕсен хушшинчи пĕтĕмĕшлĕ хутшăнусем мĕнле пулнине шута илмесĕр тăма пултараймасть.

2. Иулашки çулсенчи калаçусем пынă вăхăтра, Йапони посољстви Портсмутри договăр çинчен асăннă тĕлсенче, ăна Йут çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕ Йапони Манчжурине çарпа кĕрсе йышăнса вăл договăра пăсни çине кăтартса панă, Йапони унта нимĕнле çар та тытса тăмасси çинчен, кашни километр пуçне 15 çынран ытла мар хисеппе чукунçул хуралĕ çеç тытса тăрасси çинчен обйазательствă панă пулнă. Çавăн пекех тата Иапони Лаперуза пролививче, унта çар зонисем пур тесе каласа, совет карапĕсене ирĕклĕн çÿреме чăрмантарнисем çине кăтартса панă, çав вăхăтрах Портсмутри договăрăн 9-ш статйинче Йапони Сахалин çинче тата унăн çумĕнчи утравсенче нимĕнле укрепленисем те, çар сооружĕнийĕсем те тумастăп, тесе обйазательствă панă пулнă.

3. Çакăнпа пĕрлех тата Йапони правительстви нумайях пулмасть-ха хăй çине илнĕ обйазательствăсене çĕнĕрен пăснине паллă туса хăвармала пулать. Епĕ Китай-Хĕвелтухăç чукунçулне сутнă май Йапони правительстви хăй çине илнĕ обйазательствă çинчен калатăп, вăл обйазательствăна Иапони правительстви 1935 çулти мартăн 23-мĕшĕнчи ноти çинче çырса пынă, унта çапла каланă:

„Тÿлесе татас ĕçсене май Манчжоу-Го правительстви йенчен мĕнле те пулин йăвăрлăх-чăрмавсем сиксе тухас-мĕн пулсан СССР правительствин Манчжоу-Го правительствиччен илмели тÿлевсене пĕтĕмĕшпех тата асăннă килĕшÿре палăртса хунă срuксенче илмеле пултăр тесе, çав асăннă йăвăрлăх-чăрмавсене пула СССР правительстви нимĕн чухлĕ сийен те курмала ан пултăр тесе, Иапони правительстви çавăн пек обйазательствăсенче мĕн тума кирлине пĕтĕмĕшпех, пĕтĕм вăйа хурса тăвать“.

Йăвăрлăх-чăрмавсем Манчжоу-Го правительстви Китай-Хĕвелтухăç чукунçулĕшĕн йулашки суммăна—5.981.625 иенă тÿлеменнинчен тухса тăчĕç тата, темиçе хут астутарнă пулин те, тÿлемели срук тахçанах тухнă пулин те, Иапони правительстви хăйĕн гарантине пурнăçа кĕртмест.

Çакнашкал положени—Йапони правительстви, хăйĕн ССР Союзĕ тĕлĕшĕнчи обйазательствине пăсса пырса, Совет Союзне хăйĕн обйазательствисене пурнăçа кĕртессишĕн çеç мар çине тăни, тата Иапонин çак обйазательствăсен чиккисенчен те тухса кайакан требованийĕсене пурнăçа кĕртерессишĕн çине тăни вăл—чăтса тăмалли положени вырăнне шутланма пултараймасть.

Çакăнта каласа панисене кура, тенĕ малала Литвинăв йулташ, Совет правительстви, Йапони правительстви, сахалтан та хăйĕн Китай-Хĕвелтухăç чукунçулĕшĕн тÿлемели обйазательствисене пурнăça кĕртиччен, пулă тытас ĕçре çĕнĕрен вăрăм срукллăха конвенци тăвасси çинчен калаçма тытăнма май çук, тесе шутлать. Анчах та, кăçалхи çул вĕçĕччен, урăхла каласан, пулă тытас ĕçсем пирки вăхăтлăха тунă килĕшÿ срукĕ тухиччен, йулакан срук тÿлесе татас ĕçсем ваљљи тата пулă тытас ĕçри çĕнĕ конвенци çинчен калаçусем иртерес йе вăл калаçусене вĕçне çитерес ĕçсем ваљљи çителĕксĕр пулать тесе йышăнсан йе вăл срук çителĕксĕр пулни палăрсан, Совет правительстви, хăйĕн ирĕклĕ кăмăлне кăтартса, пулă тытас ĕçре, çаксене никĕсе хурса, çĕнĕ килĕшÿ тума хатĕр пулать: Йапонин пулă промышлĕнникĕсем хаљхи вăхăтра експлоатацилекен участкăсем вĕсен çумне арендă срукĕ тухиччен çĕнĕрен çирĕпленеççĕ. Йапонин пулă промышлĕнникĕсем хаљ експлоатацилекен, арендă срукĕсем тухнă участкăсем пирки калас пулсан, ун пек участкăсене 1939 çулти февраљ уйăхĕнче торгине тăратаççĕ, ку шута Приморйе, Охотск, Нагайево, Ича тата Бољшерецк районĕсенчи участкăсен хăшпĕр хисепĕ кĕмест, вăл участкăсене, пулă промыслине сыхлас шутпа тата стратеги тĕлĕшĕнчи шухăшсем тăрăх, Йапони експлоатацилекен участкăсен шутĕнчен пачах кăларма кирлĕ, тесе йышăннă. Вăл шутран кăларнă участкăсен шучĕ 40 участкăран ытла пулмасть (йапонĕцсем пурĕ 380 участкă експлоатацилеççĕ). Çакăнпа пĕр вăхăтрах çакăнтан тухса тăракан пулă тытмалли участкăсем çинчи консервă савăчĕсем тĕлĕшĕнчи концесси договăрĕсене пĕр çулталлăкăха малала тăсма пулать.

Совет правительствин çÿлерех çырса кăтартнă тĕрĕс те конкретлă сĕнĕвĕсем пирки Йапони правительствинче хаљхи вăхăтра ответ паман-ха.

Германире йеврейсенчен çĕнĕрен мăшкăлама пуçланă

Франци хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Берлинра йеврейсене пурăнма уйрăм квартăл—„гетто“ тунă. Йеврейсене Берлинри чылай урамсене тухса çÿреме чарнă. Çавăн пекех вĕсене киносене, театрсене, музейсене, стадионсене, спорт плошчадкисене т. ыт. çавнашкал вырăнсене çÿреме чарнă. Йеврейсен автомобил çинче те ĕçлеме йурамасть.

(ТАСС).

Çĕнĕ Чехословаки территорийĕпе халăх йышĕ

Чехословакири тĕп статистик тытăмĕн сведенийĕсем тăрăх, çĕнĕ Чехословаки территорийĕ 98.912 тăваткăл километр чухлĕ йулнă (41.600 тăваткăл километр Германи, Пољшă, Венгри çĕршывĕсене кайнă). Территори йенчен илсен, халĕ, Словаки федеративлă республикăн чи пысăк пайĕ пулать (38.450 тăваткăл километр).

Чехословакире халĕ халăхсен хисепĕ 9.807 пин çын шутланать. Германи, Пољшă, Венгри çĕршывĕсене кайнă территорисенче 4.922.500 çын пурăннă.

Чехословаки çĕршывĕн нацилĕ составĕ çапла: чехсем—6.454 пин çын, словаксем—2.055 пин çын, Карпатри украинецсем—512 пин çын, нимĕçсем—378 пин çын, йеврейсем—126 пин çын, венгерецсем—100 пин çын т. ыт. те. (ТАСС).

Йапони захватчикĕсен çухатусем

Çурçĕр Китайра йапонецсен партизансен отрйачĕсемпе çапăçса икĕ уйăх хушшинче (октябĕр—нойабĕр) 18 офицер тата 7.165 салтак вилнĕ, 2 офицер тата 685 салтак аманнă. Çак вăхăт хушшинчех китайĕнсем Иапонинне 3 офицер тата 79 салтак тыткăна илнĕ.

(ТАСС).

Римра Францине хирĕç çĕнĕрен демонстраци тунă

Парижра декабĕрĕн 6-мĕшĕнче каçхине тухнă хаçатсем Итали столицинче, Римра, каллех Францине хирĕçле демонстрацисем пулса иртни çинчен пĕлтереççĕ. Темиçе çĕр студент Рим хулин урамĕсем тăрăх: „Тунис! Тунис!“ тесе кăшкăра-кăшкăра иртнĕ.

(ТАСС).

—о—

Тунис

Фашисла Итали Абиссиние йарса илнипе çеç лăпланмасть, вăл тата Франци Тунисне йарса илме ĕмĕтленет.

Тунис—Çурçĕр Африкăра выртакан çĕршыв. Тунисăн çурçĕрпе хĕвелтухăç йенче Вăтаçĕр тинĕсĕ выртать. Кăнтăр-хĕвелтухăçра Италин Ливи текен колонийĕпе чикĕлĕ тăрать, хĕвеланăçĕнче—Алжир. Тунис территорийĕ 125,1 пин тăваткăл километр. 1936 çулти перепис тăрăх, Тунисра 2.608.313 çын пурăнать, весенчен: арабсем 2.335.623 çын, французсем—108.068 çын, йеврейсем—59.485 çын, италйанецсем—94.289 çын тата ытти халăхсем 10.848 çын. Тунисра халăх йалхуçалăх тата вылăх-чĕрлĕх ĕçĕпе пурăнать. Пуриччен ытла кунта шултра çĕрĕçĕ, вăл французсем аллинче тăрать. Тунисра фосфат, тимĕр, çĕркăмрăк, цинк рудисем пур.

Туниса Франци 1881 çулта, Англипе Германи ирĕк панă тăрăх, оккупаци тунă.

Çĕршыв пуйанлăхĕсем тата йалхуçалăх пуйанлăхĕсем Итали капиталисĕсене тахçантанпах илĕртсе тăраççĕ. Итали Тунис çĕршывĕн економикăлă пурнăçне хăй аллине йарса илме тăрăшса, кунта çине тăрсах хăйĕн колонисĕсене вырнаçтарма тăрăшнă. Халĕ, Тунисра италйанецсем нумайах йышлăн пурăннипе усă курса, Итали фашисĕсем Туниса Францирен туртса илессишĕн кампани пуçласа йанă.

Итали Туниса йарса илни, ăна Вăтаçĕр тинĕсĕн тĕп пайĕнче пуçпулса тăма тата кирек хăш вăхăтра та Иевропăпа Ази, Иевропăпа Африкă хушшинчи тинĕс çулне пÿлсе хума май панă пулĕччĕ.

(ТАСС).

—о—

Индири рабочисен забастовки

Индири Бенгаљ провинцинчи джут хапрăкĕсенче ĕçлекен 50 пин рабочи забастовкă пуçланă. Вĕсем çак забастовкăна джут туса кăларассине чакармала тата ĕç ернине кĕскетмеле тăвакан саккуна хирĕç протест тăвас шутпа пуçланă. Çак саккуна кăларнă хыççăн нумай рабочисене ĕçрен кăларнă пулнă.

(ТАСС).

Шупашкар интеллигенцийĕн пухăвĕ

Шупашкарта декабĕрĕн 8-мĕшĕнче республикă столицинчи интеллигенции пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухăва аслă шкулсенчи ăслăлăх работникĕсем, преподавательсем, хулари врачсемпе учительсем, республикăри партипе совет организацисенче ĕçлекенсем пынă.

Пухура Парти Чăваш Обкомĕн çекретарĕ А. А. Волкăв йулташ ПСК(б)П Тĕпкомĕ партилĕ пропагандă ĕçне йĕркелесси пирки йышăннă постановлени çинчен доклад туса пачĕ. Волкăв йулташ хăйĕн докладĕнче Тĕпком решенине тĕплĕн ăнлантарса парса, хулари интеллигенцине марксисăм-ленинисăм теорине алла илессишĕн çине тăрса, тимлĕн ĕçлеме чĕнчĕ. Вăл хăйĕн сăмахне парти Тĕпкомĕн решенийĕнчи сăмахсемпе вĕçлерĕ.

— „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕ“ пирĕн партипе совет халăхĕн пурнăçĕнче идейăлă-политикăлă çĕнĕ хăватлă çĕкленĕвне пуçарса йарать.

Общĕствăлă аталанăвăн саккунĕсене пĕлнипе хĕçпăшаллантаракан марксисăм-ленинисăм теорине вĕренсе алла илсе пырса, пирĕн кадрсем, чăн-чăн никам çĕнтерейми пулса тăрĕç, çак теори йалавĕ айне тăрса, Ленин—Сталин парти йертсе пынипе пĕтĕм совет халăхне коммунисăм çĕнтерĕвĕ патне тата ăнăçлăрах илсе пырĕç“.

Доклад хыççăн пренире тухса калакансем „ПСК(б)Парти Историйĕн Кĕске курсне“ тата парти Тĕпкомĕ пропагандă ĕçне йĕркелесси çинчен йышăннă историлĕ постановленине пурте пĕр тулли кăмăлпа ырларĕç.

Чăвашсен йалхуçалăх институтĕнчи политекономи преподавателĕ Филимонăвă йулташ:

— „Парти Историйĕн Кĕске курсĕ“ манăн чи йуратнă, чи çывăх, куллен умра тăракан кĕнеке пулса тăчĕ,—тет.—Пирĕншĕн, социаллă-економикă ăслăлăхсене вĕрентекенсемшĕн, парти историйĕ—пĕтĕм ĕçе йертсе пыракан пахаран та паха пособи. Вăл пĕтĕм ĕçсыннисене общĕствăлă аталанăвăн саккунĕсене тарăнăн ăнланса илме пулăшĕ.

— Манран,—тет малала Филимонăвă йулташ,—час-часах çапла ыйтаççĕ: мĕнле-ха есĕр хĕрарăм пулсах, аслă шкулта социаллă-економи наукине вĕрентме тивĕçлĕ пултăн?—теççĕ. Пирĕн совет çĕршывĕнче хĕрарăм тума пултарман ĕç çук, совет хĕрарăмĕ, арçынпа пĕр танах, пур пысăк ĕçсене те çĕнтерсе илет. Ĕççыннисен чĕрине çывăх пулса тăракан марксисăм-ленинисăм теорине алла илессишĕн совет хĕрарăмĕ чи вĕри хастарлăхпа çунать.

Чăвашсен педагогикăлă институчĕн директорĕ Нейман йулташ совет интеллигенцин халăх, çĕршыв, парти умĕнчи тивĕçлĕхĕсемпе обйазăннăçĕсем çинчен калать.

— Куллех практикăлă пысăк ĕçре пирĕн йертсе пыракан кадрсем теори тĕлĕшĕнчен кайарах йулни сисĕнет. Кун пек кайа йулнине пирĕн пĕтермеле. Пирĕн специалиссен хăйсен специаљнăçĕсен хуппи ăшне кĕрсе ларассинчен сыхланмала. Кашни специалис хăйĕн ĕçне Ленин—Сталин аслă ĕçĕпе, марксисăм-ленинисăм теорийĕпе çыхăнтармала.

Малала Нейман йулташ хулара нумай халăхлă лекцисем иртерме уйрăм пысăк залă тăвас, вăл лекцисене кулленхи ĕç системине кĕртес ыйтусем çинче чарăнса тăрать.

Хулари чи ватă врачсенчен пĕри Обухăв йулташ ĕлĕкхипе халъхи интеллигенци хушшинчи пысăк уйрăмлăх çинчен, хаљхи интеллигенци пĕтĕм халăхшăн ĕçлеме телейлĕ пулни çинчен, совет работникĕн социалисăмшăн кĕрешĕ çĕрте тĕнчери чи çивĕч хĕçпăшалпа — марксисăм ленинисăм теорийĕпе хĕçпăшалланассишĕн çине тăрса ĕçлеме кирли çинчен калать.

Кусемсĕр пуçне пухура Черйов (Сывлăх халăх комиссариачĕ), Никишов (пединститут доценчĕ), Петропавловский (йалхуçалăх институтĕнчен) йулташсем тухса каларĕç.

Вĕсем пропагандăн практикăла ĕçĕсем çинче чарăнса тăчĕç.

Хулара интеллигенци ваљљи парти историйĕпе икĕ лекци кăна иртернĕ. Лекцисене вăйлатмала. Лекторсем итлекенсем ыйтнине пур чухне те çырлахтармаççĕ, лекторсен квалификацине ÿстерессишĕн уйрăмах хытă ĕçлемеле. Аслă шкулсенче ĕçлекенсен профеççилĕ Союзĕ организацилене каçхи университетăн ĕçне вăйлатмала. Республикăри пичетпе, радиопа анлăнрах усă курмала.

Тухса калакансем хулари интеллигенцин йалти интеллигенцине пулăшма кирли çинчен уйрăмах татса каларĕç.

Шупашкарти интеллигенцин пухăвĕ халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ патне саламлă çыру йачĕ.

КОНСУЛЬТАЦИ

Пĕр çĕршывра коммунисăм тăвасси çинчен *)

* * *

Тулли коммунисăм обществи капиталисăмлă йĕритавралăх хушшинче тăракан çĕршывра тытăнса тăма пултарат-и, тытăнса тăма пултарат пулсан, коммунисăм обществине сыхласа тăрассине мĕнле майсемпе организацилеме пулат? Коммунисăм обществине капиталисăмлă йĕритавралăх хушшинче тума пулат пулсан, ун чухне вара, коммунисăм чухне, йаланхи çар, çапла вара, государствă та сыхланса йулат-и?

Çак ыйтусене ответленĕ чухне, марксисăм-ленинисăм вĕрентĕвĕ, пирĕн партин учителĕ Сталин йулташ творчествă йенчен аталантарса тата çӳлĕрех пусăма хăпартнă марксисăм-ленинисăм вĕрентĕвĕ мĕн калани çине пăхас пулат.

Социалисăмлă совет государствин, шалти задачăсем йенчен кăна илсен те, коммунисăмăн чи çӳлти фазине туса тĕреклетеччĕнех, тулти коммунисăм пурнăçа кĕриччĕнех тытăнса тăмала пирки Ленин хайĕн „Государство и революция" кĕнекинче çакăн пек теори йенчен питĕ пахан кăтартса панă выран пур: „Коммунисăмăн чи çӳлти" фазине çитиччĕнхи вăхăтра социалисеем ĕç виçипе потреблени виçине обществă йенчен тата государствă йенчен пит çирĕп контроль тăвассишĕн тăраççĕ (т. XXI, стр. 437).

Коммунисăмăн чи çӳлти фазине илес пулсан, пирĕн пропагандиссем ку таранччен: коммунисăмăн чи çӳлти фазинче кирек мĕнле услови пулсан та, государствă пĕтмеле, государствăн йаланхи çар йышши органĕсем те пĕтмеле, тесе вĕрентнĕ.

Енгельс „Анти-Дюринг" кĕнекере: пусмарта тытса тăма кирлĕ пĕр обществăлă клас та пулмасан, классем пĕр-пĕрне тытăçасси тата пĕр клас тепĕр класа пăхăнтарса тăрасси пĕтсен, вара государствă та кирлĕ мара тухат, тесе кăтартса панă. „Государствă чăн-чăнах пĕтĕм обществăн представителĕ выранне тăрса тухакан пирвайхи акт—хăй аллине обществă йачĕпе производствă хатĕрĕсене илни—çакăнпа пĕрлех государствă выранĕнче хăй тĕллĕн тунă йулашки акт пулат. Государствă влаçĕ обществĕннăй отношенисене хутшăнасси пĕр облаçĕ хыççăн тепринче вырансăр пулса пырат, вара хăй тĕллĕнех çывăрса кайат. Çынсене тытса тăрас выранна йапаласене тытса тăрасси тата производствă процессĕсене йертсе пырасси йышăнат. Государствăна пăрахаçа „калармаççĕ", вăл пĕтет" (Ф. Энгельс, „Анти-Дюринг", стр. 230. Изд. 1938 г.).

Государствă коммунисăм вăхăтĕнче пĕтесси çинчен Енгельс ыйтăва çакăн пек лартса, ăна теори йенчен кăна илнĕ. Йавленине (кунта ĕнтĕ коммунисăм обществине) средасен условисенчен уйрăмăн илнĕ. Пирĕн условисенче государствă пĕтесси çинчен ыйтăва хайне уйрăмăн илесси—тĕнчери лару-тăруран пăрăнса кайассине пĕлтерет.

Чăннипе, политикăлă чĕрĕ пурнăçра, епĕр нихăçан те тĕнчери лару-тăруран „пăрăнса кайма" пултараймастпăр. Совет обществи сывлăшсăр пушă выранта пурăнмаст. Социалисăм çĕнтернĕ çĕршыва хупăрласа тăракан йĕритавралăх—капиталисăмлă йĕритавралăх—социалисăма тăшманла курăймасăр тăрат.

Çавăн пекех тата Енгельс государствă пĕтесси çинчен ыйтăва лартнă чухне социалисăм капиталисăмлă пур тĕп çĕршывсенче те пĕр вăхăтра çĕнтерме пултарассине хисепе илсе каланă тесе шутлама та пулат. Пур капиталисăмлă çĕршывсенче те социалисăм пĕр вăхăтра çĕнтерес установкăна Марксăпа Енгельс монополисăмлă капиталисăмччĕнхи саманара илнĕ.

Анчах та империалисăм самани условийĕсенче. Ленин хайĕн кĕнекисенче ĕнентересе панă тăрăх, „социалисăм пĕр вăхăтрах пур çĕршывсенче те çĕнтерме пултараймаст. Вăл малтан пĕр йе темиçе çĕршывра çĕнтерет, ыттисем паллă вăхăт хушшине буржуалă йе буржуалă йĕркене çитиччĕнхи çĕршывсем пулса йулаççĕ. Çак вăл хирĕçӳсем кăларма çеç мар, ытти çĕршывсенчи буржуази тӳррех социалисăмлă государствăри çĕнтерӳлĕ пролетариата çĕмĕрсе тăкма тăрăшассине кăларса тăратат. Çакăн пек чухне пирĕн йенчен вăрçă саккунлă тата выранлă пулмала. Çакă вăл социалисăмшăн, ытти халăхсене буржуазирен хăтарассишĕн пыракан вăрçă пулнă пулĕччĕ" (т. XIX, стр. 325).

„Мирлĕ" вăхăт тапхăрĕ çеç мар тата тӳррех, хуçалăхăн социалисăмлă çиçтемипе капиталисăмлă системи хушшинче хĕçпăшаллă кĕрешӳсен нумай йе сахал вăхăта пыракан тапхăрта пурпĕрех пулмала. Ку тапхăр вăл капиталисăма пĕтĕм тĕнчипе татăклăнах çĕнтериччен, пĕтĕм тĕнчипе йе сахалтан та ĕçе татса паракан капиталисăмлă çĕршывсенче социалисăм татăклăнах çĕнтерсе иличчен çаплах пырат.

Сталин йулташ 1927 çулта Америкăран килнĕ пирвайхи рабочи делегаципе калаçнă чухне коммунисăм татăклăнах çĕнтермели, коммунисăм обществи туллин çĕнтермели условисене çакăн пек кăтартса панă:

„Коммунисăм обществине пĕтĕмпех туса çитерме кирлĕ пĕтĕм тĕнчери условисене илес пулсан, акă мĕн калас пулат: вăл условисем капиталисăмлă çĕршывсенчи револьуцилĕ кризиссемпе рабочи класăн револьуцилĕ кĕрешĕвĕ ӳссе пынă май пулса, вăйланса пырĕç. Пĕр çĕршывра йе темиçе çĕршывсенчи рабочи клас социалисăм йе, пушшех те, коммунисăм патне пынă вăхăтра ытти çĕршывсенчи капиталиссем çакăн çине пĕр хирĕçмесĕрех пăхса, аллисене усса ларĕç тесе шутлама çук. Пĕр çĕршывра социалисăм çĕнтерӳлĕ пулса пыни çине капиталисăмлă çĕршывсенчи рабочи клас та айаккăран анчах пăхса тăрĕ тесе шутлама пушшех те сăлтав çук. Чăннипе, капиталиссем çакнашкал çĕршывсене пăвса пăрахас тесе мĕн май пуррине пĕтĕмпех тăвĕç. Чăннипе, пĕр-пĕр çĕршыври рабочи клас социалисăм йе, пушшех те, коммунисăм тăвас ĕçре йарса пусакан кашни ăнăçулă утăм капиталисăмлă çĕршывсенчи рабочи класа хăйсен çĕршывĕсенче пролетариат диктатури туса, социалисăм тăвассишĕн кĕрешме никам тытса чарайми хавасланатарса тăрĕ" („Вопросы ленинизма", стр. 193—194, 10-е изд.).

Малтан каланисенчен курăнмăр ĕнтĕ, Енгельс государствă пĕтесси çинчен ыйту лартнă чухне, вăл пăхса тухакан обществăра пĕр-пĕрне хирĕçле, антагонисла классем пулмала мар йенчен илнĕ, çапла вара, унта путарса тăмали те никам та çук; çак путарса тумали ĕçе туса тăракан государствă та кирлĕ мар пулса тăрат. Анчах та çакăн пек лартнă ыйтăва тĕнче арени çине куçарас пулсан, епĕр акă мĕн куратпăр: тĕнче хуçалăх арени çинче татăклăнах социалисăм çĕнтериччен тата капиталисăма татăклăнах парăнтариччен социалисăма курайман тăшманла классемпе вĕсен государствисем йулаççĕ, вĕсемпе кĕрешесси пур пĕрех пулмала.

Социалисăмпа капиталисăм хушшинчи кĕрешӳ мĕнпе пĕтмели паллă, тĕнче чăмăрĕ çинче пурăнакан халăхсен пысăк масси капиталисăма хирĕç револьуцилĕ кĕрешĕве хутшăнат.

Империалисăмлă государствăсене хирĕç пулас çапăçусенче социалисăм татăклăнах çĕнтересси пурпĕрех пулмали çине кăтартса парса. Ленин „Лучше меньше, да лучше" статйара çырнă:

„... Кĕрешу мĕнпе пĕтессине, пĕтĕмĕшпе илсен, çĕр çинче пурăнакан халăхăн чи пысăк йышĕ, йулашкинчен, капиталисăмпа хайĕнпе кĕрешме вĕренсе, воспитани илсе пынинчен те курма пулат.

Кĕрешӳ мĕнпе пĕтесси, йулашкинчен, Россййă, Инди, Китай т. ыт. халăхĕн пысăк нумайрахăшĕ пулнинчен килет. Шăпах та халăхăн çак нумайрахăшĕ ĕнтĕ йулашки çулсенче ирĕке тухассишĕн нихçанхинчен те питĕ хăвăрттăн кĕрешĕве хутшăнса пырат те, çапла вара, çак йенчен илсен, тĕнчери кĕрешӳ мĕнпе пĕтес пирки нимĕн иккĕленмели те çук. Çак йенчен илсен, социалисăм татăклăнах çĕнтересси пурпĕрех пулмала" (т. XXVII, стр. 416—417).

Тепĕр выранта Ленин çырнă:

„Нимĕн иккĕленмели те çук, Йевропăра социалисăмлă револьуци пулмала, вăл пулат те. Социалисăм татăклăнах çĕнтересси çинчен пирĕн шанăç çакна ĕненни çинче тата çакна научнă курса тăни çинче никĕсленсе тăрат" (т. XXII, стр 194).

Социалисăм тĕнчен улттăмĕш пайĕнче çĕнтернĕ тата социалисăм татăклăнах çĕнтерессишĕн кĕрешекен самана условисенче социалисăм (тата коммунисăм) çĕнтернĕ çĕршывăн хĕçпăшаллă вăй, çĕршыва капиталисăмлă йĕритавралăхран хӳтлесе тăма пултаракан тата капиталисăмлă йĕритавралăха татăклăнах çĕнтерме май паракан çар пулмала.

20—15 çул кайала, çар техникин прогресĕ хальхин пек вăйлăн та хăвăрттăн пулса пыман чухне, çĕнĕ хĕçпăшалсем (авиаци, танксем, хими т. ыт.) хальхин пек пысăк выран йышăнса тăман чухне, социалисăм çĕнтернĕ çĕршыв капиталисăмлă йĕритавралăхран, йалан тытса тăракан çарсăр та сыхланса тăма пултарат, тесе шутлама пулнă.

Граждан вăрçи вăхăтĕнче кăнаха винтовкăпа пулемет маларахри выранта пулнă, самольотсем, танксем, хими кăларахпа йышăннă выранна йышăнайман пулнă. Çавăнпа та ун чухне вĕрентнĕ, квалификацилĕ кадрсем сахалтарах кирлĕ пулнă, бойецсене çар ĕçне вĕрентме те вăхăт сахалтарах кирлĕ пулнă. Çакăнтан паллах ĕнтĕ, пирĕн партин 1919 çулта йышăннă программинче те, классене пĕтернĕ май, Хĕрлĕ Çар „пĕтĕм халăхăн социалисăмлă милицийĕ пулса йулат" тенĕ.

Капиталисăмлă йĕритавралăхпа кĕрешме халăха хĕçпăшаллантарасси çинчен, йаланхи çара пĕтĕм халăх çарĕпе, социалисăмлă милиципе улăштарасси çинчен ыйтăва хăй вăхăтĕнче çакăн пек лартни теори йенчен тĕрĕс пулнă.

Анчах та хальхи конкретлă условисем йенчен, йулашки 15—10 çул хушшинче çар техники кĕретĕнех улшăнни, капиталисăмлă çарсем хĕçпăшалланасси ӳссе пыни йенчен илсен, халĕ ыйтăва çавăн пек лартнине тепĕр хут пăхса тухни кирлĕ.

Социалисăм обществине хӳтлеме кирлĕ çар тăшманла капиталисăмлă йĕритавралăх çарĕсенчен вăйсăр мар, вăйлăрах пултăр тесен, социалисăмлă, совет государствин Хĕрлĕ Çарне йаланхи нумай йышлă кадрсем кирлĕ, вăл кадрсен çĕнĕ çар техникине (авиаци, танксем, хими, сывлăшран килсе тапăннине хирĕç химипе тапăннине хирĕç кĕрешесси) пур йенчен те тĕплĕн пĕлмеле, хăйсен хатĕрленĕвне пĕрмайах малала йарса пымала. Социалисăмлă совет государствине йаланхи Хĕрлĕ Çар кирлĕ, вăл çар кирек хăш вăхăтра та социалисăм тăшманĕсене, фашисла агрессăрсене çĕмĕрсе тăкма хатĕр пулмала. Шăпах та йаланхи çар, тĕрлĕ фронтсенче кирек хăш вăхăтра та тăшмана хирĕç тухма хатĕр тăракан çар кирлĕ, хăй вăхăтĕнче шухăшланă пек социалисăмлă милици мар, вăрçă вăхăтĕнче пĕтĕм халăха хĕçпăшаллантарни мар.

Социалисăмлă обществăна сыхласа тăма (вăл обществă йĕрипенех коммунисăм обществине ӳссе пырат) йаланхи çар кирлĕ пулсан, вара государствă та, коммунисăмăн çӳлти фазинче пулсан та, капиталисăмлă йĕритавралăх пур чухне, кирлĕ пулат.

Пирĕн саманари конкретлă, историлĕ условисене илес пулсан, государствă, йаланхи çар тытса тăма кирлĕ мар пулса тăрсан, çара снабжени тăратакан органсем кирлĕ мар пулса тăрсан çеç пĕтме пултарат.

Анчах, мĕншĕн капиталисăмлă йĕритавралăх условисенче государствă коммунисăмăн çӳлти фазинче те тытăнса тăмалине ăнланас тесен, тата социалисăм çĕнтернĕ май социалисăмлă, совет государствин функцийĕсем (ĕçĕсем) те чылай улшăннине асра тытас пулат.

Малтанхи выранна социалисăм (унтан коммунисăм) обществине капиталисăмлă йĕритавралăхран сыхласа тăрас функцисем тухса тăраççĕ. Експлоататăрла классене путарса тăрас функци, тăшманла классене çĕмĕрсе тăкса пĕтернĕ хыççăн, иккĕмĕш выранна кайса тăрат. Социалисăмшăн тăшманла уйрăм çынсемпе ушкăнсене путарас задачă йулат, анчах та çак çынсемпе ушкăнсен пирĕн çĕршывра мĕн чухлĕ те пулин класлă пысăк никĕс çук, вĕсем, чăн малтан, капиталисăмлă йĕритавралăх агентурисем пулаççĕ, вĕсене капиталисăмлă йĕритавралăх пулăшса, вăй парса тăрат. Çавăнпа та çак контрреволюцилĕ, шпионла, сăтăрçăла елементсемпе кĕрешекен органсем кирлĕ пулаççĕ. Капиталисăмлă йĕритавралăх пур чухне мухтавлă совет разведки—НКВД—пулмалах.

Социалисăмлă государствă хуçалăхпа культурăн пур отраçлисене те йертсе пырат, вăл совет обществине малала, коммунисăм патне илсе пырат; социалисăмлă государствăн хуçалăхлă функцисем пĕрмайах пысăкланса пыраççĕ. Анчах та коммунисăмăн çӳлти фазинче, „кашниинчен—унăн пултарулăхĕ таран, кашнине—ăна кирлĕ таран" текен коммунисăмлă принципа пурнăçа кĕртнĕ хыççăн, обществăпа государствă йенчен „ĕç виçипе потреблени виçине контроль туса тăрасси" кирлĕ мар пулса тăрсан, хуçалăхпа культурăна йертсе пырас функцишĕн кăна государствă функцине хăварасси те кирлех мар пек. Анчах та, коммунисăм обществине сыхласа тăрас функци йенчен илсен, государствă капиталисăмлă йĕритавралăха пĕтериччен пĕтме пултараймаст.

* * *

ВЫВĂД. Çапла ĕнтĕ, теори йенчен илсен, капиталисăмлă йĕритавралăха пĕтериччен коммунисăм чухне те государствă йулмалине курма, чухласа илме пулат. Йаланхи çар йулат пулсан, государствă та, пĕтĕм халăх государстви, социалисăмпа коммунисăм обществин государстви, йулат. Çак вăл пире Сталин йулташ вĕрентнисенчен тухса тăракан. Сталин йулташ икĕ системă хушшинчи—капиталисăмлă системăпа социалисăмлă системă хушшинчи кĕрешӳ çинчен, капиталисăмлă йĕритавралăх хăрушлăхĕ çинчен, социалисăмлă государствăн хăватне пур майсемпе те тĕреклетсе пырасси çинчен пĕр хут çеç мар кăтартса панисенчен тӳррех тухса тăракан вывăд. Социалисăмлă государствăн кирлĕрен те кирлĕ функцийĕ вăл—хамăр çĕршывра тăшманла, капиталисла классене пĕтернĕ хыççăн, социалисăм обществине тулашри тăшмансенчен, капиталисăмлă йĕритавралăхран сыхласа тăрасси тата хуçалăхпа культурăн пĕтĕм отраçлисене йертсе пырасси пулат. Çакна вĕрентет пире Сталин йулташ.

Социалисăм çĕр чăмăрĕн улттăмĕш пайĕнче çĕнтернĕ тапхăрти условисенче социалисăмлă государствăн тĕп функцийĕ—социалисăма, унтан вара коммунисăма капиталисăмлă йĕритавралăхран сыхласа тăрасси, капиталисăмлă йĕритавралăха çĕнтерес ĕçе организацилесси пулат.

Капиталисăмлă йĕритавралăх условисенче йаланхи Хĕрлĕ Çара хăвармала пулни, çапла вара коммунисăмăн çӳлти фазинче те государствă йулмала пулни, производителлĕ вăйсем тăвăллăн ӳссе пынă никĕс çинче коммунисăмăн тĕп принципĕ—продуктăсене мĕн таран кирлине кура валеçмеле пулас принцип йĕрипен пурнăçа кĕрсе пырассине хирĕç пымаст. Пирĕн çĕршывра социалисăм çĕнтернĕ хыççăн, Сталинла икĕ пилĕкçуллăх хушшинче пĕтĕм халăх хуçалăхне реконструкцилени тăрăх, продуктисене «кашнинчен—пултарнă таран, кашнине—унăн ĕçне кура» текен социалисăмлă принцип тăрăх валеçессинчен „кашнинчен—унăн пултарулăхĕ таран, кашнине—ăна кирлĕ таран" текен коммунисăмлă принципа йĕрипен куçса пыма пур майсем те пур. Çакăнта пулат те ĕнтĕ коммунисăмăн айалтипе çӳлти фазисем хушшинчи тĕп уйрăмлăх.

Капиталисăмлă йĕритавралăх хушшинче те пирĕн çĕршывра, паллах тулли коммунисăм обществи тума тата вăл тытăнса тăма пултарат, тесе калама пулат.

Капиталисăмлă йĕритавралăх тытăнса тăнă чухне йаланхи Хĕрлĕ Çар пулни, государствă пулни социалисăмран йĕрипенех коммунисăма куçса пырассине хирĕç мар. Кунта çакăн пек те пулма пултарат: коммунисăмăн çӳлти сыпăкне пĕтĕмпех куçса çитиччен малтан капиталисăмлă йĕритавралăха пĕтересси те пулма пултарат. Анчах тата тепĕр майлă та пулма пултарат: коммунисăмăн çӳлти фазине тен пĕтĕмпех çитĕпĕр, капиталисăмлă йĕритавралăх йулма пултарат. Вара коммунисăмăн çӳлти фазинче те йаланхи Хĕрлĕ Çар, апла пулсан, государствă та йулат.

Коммунисăм татăклăнах çĕнтерес ыйтăва капиталисăмлă çĕршывсем интервенци тума пултарас хăрушлăхран гаранти тăвас йенчен илсен, кунта Сталин йулташ Иванов йулташ çырăвне хирĕç панă ответра кăтартса тата ăнлантарса панисем пĕтĕмпех выранлă, вăл выранна социалисăм татăклăнах çĕнтерес ыйту тăрăх «Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Парти Историйĕнче» илсе кăтартнă:

«... Капиталисăмлă интервенци хăрушлăхне пĕтерме капиталисăмлă йĕритавралăха пĕтерни кирлĕ, капиталисăмлă йĕритавралăха вара сахалтан та темиçе çĕршывра çĕнтерӳлĕ пролетарилĕ револьуци пулсан çеç пĕтерме пулат. Анчах кунтан акă мĕн тухса тăрат: ССР Сойузĕнче социалисăм çĕнтерни, хуçалăхăн капиталисăмлă системине пĕтерсе хуçалăхăн социалисăмлă системине туса хунине пĕлтерекен çĕнтерӳ, вăл çапах та татăклă çĕнтерӳ тесе шутланма пултараймаст, мĕншĕн тесен йут çĕршывсем хĕçпăшаллă интервенци тăвас тата капиталисăма кайала тавăрма хăтланса пăхас хăрушлăх çаплах йулат, мĕншĕн тесен социалисăм çĕршывĕ çавăн пек хăрушлăхран гарантиленмен. Йут çĕршывсен капиталисăмлă интервенци хăрушлăхне пĕтерес тесен, капиталисăмлă йĕритавралăха пĕтерес пулат.

Паллах, совет халăхĕпе унăн Хĕрлĕ Çарĕ Совет влаçĕ тĕрĕс политикă тытса пынă чухне, 1918—1920 çулсенче капиталиссен пирвайхи интервенцине отпор панă пекех, йут çĕршывсен капиталисăмлă çĕнĕ интервенцине те тивĕçлĕ отпор пама пултарĕç. Анчах та ку вăл çакăнпа капиталисăмлă çĕнĕ интервенцисен хăрушлăхне пĕтернине пĕлтермест-ха. Пĕрремĕш интервенцине çĕмĕрсе тăкни çĕнĕ интервенци хăрушлăхне пĕтермерĕ, мĕншĕн тесен интервенци хăрушлăхĕн çăлкуçĕ—капиталисăмлă йĕритавралăх—малала та йулат. Капиталисăмлă йĕритавралăх малала та йулат пулсан, çĕнĕ интервенцине çĕмĕрсе тăкни те интервенци хăрушлăхне пĕтермест.

Çакăнтан акă мĕн тухса тăрат: капиталисăмлă çĕршывсенче пролетарилĕ револьуци çĕнтересси ССР Сойузĕнчи ĕççыннисен тăванла интересĕ пулса тăрат». («ПСК(б)П Историйĕ», стр. 261—262).

Учитĕлсем—выдвиженĕцсем

Пирĕн совет учитĕлĕсем хăйсен пĕлĕвне кунран-кун ӳстерсе пыраççĕ, государствăпа обществăлă организацисенче пысăк та ответлă вырансенче ĕçлеме тивĕçлĕ пулаççĕ.

Акă Турхан районĕнчи çутĕç пайнех илĕпĕр. Çутĕç пайĕн заведуйущийĕ В. С. Антонăв йулташ 12 çул хушши учитĕлре ĕçленĕ.

Малтанах вăл Тутар республикĕнчи Кăннакушкă шкулĕнче 6 çул вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ пулнă. Кунта ĕçленĕ чух Антонăв йулташ ачасем хушшинчи дисциплинăпа вĕренӳ пахалăхне тивĕçлĕ выранна лартнă. Кун хыççăн вăл Çĕнйалти (Турхан районĕ) туллимар вăтам шкулăн директăрĕ пулса ĕçленĕ. Шкулта воспитанипе вĕренӳ ĕçне аван йĕркеленĕ. Шкул хуçалăхĕ нумай ӳснĕ. Çĕнйал шкулĕ районра чи малти выранна йышăннă.

1937—38 вĕренӳ çулĕнче шкулта 42 ударник, 18 отличник пулнă. 7-мĕш класран 7 ача мухтав грамăтипе вĕренсе тухнă. 7-мĕш класран вĕренсе тухнисем халь пурте училищăсенче йе вăтам шкулсенче вĕренеççĕ. Çакăн пек аван ĕçленине кура Антонăв йулташа ответлă выранна—районри çутĕç пайĕн заведуйущийне лартнă.

Çутĕç пайĕн аппаратĕнче шкулсен инструктăрĕ пулса И. Макарăв йулташ ĕçлет. Макарăв йулташ та выдвиженĕц. Малтан вăл Кĕçĕн Шăхальри туллимар вăтам шкулта математикă преподавателĕ пулса ĕçленĕ. Унăн предмечĕпе „плохо" паллă илекен пĕр ача та пулман. Шкулта ĕçленĕ хушăрах Макарăв йулташ хăйĕн пĕлӳне те ӳстерсех пынă.

Макарăв йулташ шкулсене час-часах тухса çӳрет. Учитĕлсене методикăлă кăтартусем парса пулăшат. Хальхи вăхăтра вăл ИПККНО çумĕнче йĕркеленнĕ çутĕç пай инструктăрĕсен курсĕнче вĕренет.

Çавăн пекех Николайĕв йулташа та çутĕç пайĕнче ĕçлеме Макарăвпа пĕр вăхăталах илнĕ. Учитĕлре вăл 12 çул ĕçленĕ. Мускаври философипе литературă институчĕн заочникĕ. Николайĕв—опытлă инструктăр. Вăл методикă тĕлĕшĕпе нумай паха кăтартусем парат.

Учитĕл ĕçĕнчен райçутĕç пайне ответлă та хисеплĕ ĕçе куçарнă йулташсем татах та пур. Елĕк районĕн çутĕç пай инструктăрĕ И. Н. Ошков йулташ Килтĕшри туллимар вăтам шкулта вĕрентнĕ. Вăл учитĕлсен институчĕн истори факултетĕнчен отличнă паллăсемпе вĕренсе тухнă.

1937—38 вĕренӳ çулĕнче Ошков йулташа райçутĕç пайне ĕçлеме куçарнă, вăл учитĕлсене ĕçре нумай пулăшат.

Халь ăна Чăвашсен Çутĕç халăх комиссариачĕ Мускава, автономлă республикĕсен Çутĕç халăх комиссариачĕсем вальли инструктăрсем хатĕрлекен курса вĕренме йачĕ.

Арк. Нестерăв.

Осоавиахим организацине турĕç

Кăшаркассинче (Çĕрпӳ р.) колхозниксемпе йединоличниксен пухăвĕнче тĕнчери лару-тăру çинчен ăнлантарса пачĕç. Çакăн хыççăн йалта 15 çынран Осоавиахим организацине турĕç. Халĕ организаци членĕсем винтовкăран тĕл пеме тата противогазпа усă курма вĕренеççĕ.

В. Владимирăв.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Партине кĕреççĕ

Иртнĕ çулсенче Тăрмăшри „Новый путь" тата Хĕрлĕ Çырти „Красное знамя" колхозсенче (Йелчĕк районĕ) политикăлă-массăлă ĕçсене начар организациленĕ, колхозри актив хушшинче ĕçлемен пирки партине илес ĕç чарăнсах ларнăччĕ. Кăçал пуçламĕш парторганизаци колхозниксем хушшинчи политикăлă-массăлă ĕçе чылай вăйлатрĕ. Ку ĕçре йалти туллимар вăтам шкулта вĕрентекен учитĕлсем те аванах пулăшаççĕ. Çапла вара, партине илес ĕç те йусанчĕ. Кăçал пуçламĕш парторганизаци икĕ çынна партине илнĕ, пĕр çынна кандидатран члена куçарнă тата икĕ çынна сочувствуйущисен ретне илнĕ.

Ку ĕçе вăйлатма пире ПСК(б)П райкомĕн инструктăрĕ Смирнов йулташ та пулăшрĕ.

Коммуниссем „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" вĕренеççĕ. Вĕсем пурте çĕнĕ учебниксем илчĕç. „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" коммуниссене вĕрентме ПСК(б)П райкомĕ пропагандис Андрейĕв йулташа уйăрса пачĕ.

Парторг Шчербаков.

Партин пĕрремĕш сйесĕ пулнă çуртра

Минскра, Совет урамĕн вĕçĕнче пĕчĕк, пĕр хутлă, симĕс сăрпа сăрланă çурт ларат.

Çурт кĕтессинче айакранах ылтăн саспалисем йăлтăртатса тăни курăнат: „Здесь происходил Первый с"езд РСДРП—13—15 (1—3) марта 1898 г".

Çак çуртра халь музей. Унта виçĕ пӳлĕм. Пĕрремĕшĕнче—вырăс социал-демократи йухăмĕ пуçланнă тапхăра кăтартнă. Кунта сйес делегачĕсен сăнĕсем, вĕсем тăххăрăн. Витринăсем çинче социал-демократсен кружокĕсем ĕçлеме пуçланă вăхăта кăтартакан ӳкерчĕксем, В. И. Ленинăн малтанхи кĕнекисенчен илнĕ цитатăсем.

Иккĕмĕш пӳлĕмре—вăл вăхăтри паллă марксиссемпе Россййăри социал-демократилĕ кружоксен руководителĕсен сăн-ӳкерчĕкĕсем, вĕсен алçырăвĕсен фотокопийĕсем. Кунтах Ленинăн 1895—96 çулсем хушшинче çырнă ĕçĕсем усранаççĕ. Акă социал-демократсен парти программин проекчĕ. Ăна Владимир Илйич кĕнеке строкисен хушшине сĕтпе çырнă пулнă. Кунтах Ленин 1895—96 çулсенче ларнă Питĕр тĕрмин макечĕ.

И. В. Сталинăн çамрăклăхĕ, унăн револьуцилĕ пултарулăхĕн ӳсĕмĕ, Закавказйĕри марксисла ушкăн „Месаме-даси", Волгин художникăн „Сталин в детстве" картинĕ уйрăмăнах асра тăрат.

Виççĕмĕш пӳлĕмре—сйес протоколĕсен фотокопийĕсем, малтанхи Тĕп Комитет членĕсен, сăнĕсем, сйес манифесĕ.

Çак çуртрах историлĕ сйесĕн чĕрĕ свидетелĕ—утмăл çулхи карчăк пурăнат. Хĕрĕх çул кайала, вăл çав çурт хуçисене пăхса пурăннă. Халь те карчăк сйес делегачĕсене лайăх астăват.

Кон. Кольцов.

Консультаци кирлĕ

Чăрш Çырма йалĕнче (Вăрмар районĕ) „ПСК(б)П Историне" вĕренме икĕ кружок организациленĕччĕ. Пĕр кружокра йалти коммуниссемпе комсомолĕцсем вĕреннĕ. Унта парти райкомĕ уйăрнă пропагандис вĕрентнĕ. Тепĕр кружокĕнче туллимар вăтам шкулти учитĕлсем вĕреннĕ.

Халь парти Тĕпкомĕ пропагандă çинчен кăларнă постановленине сӳтсе-йаврĕç. Постановленине пурте ырларĕç. ПСК(б)П историне мĕнле вĕренесси çинчен халиччен кружокра пулнисем çапла каларĕç: учитĕлсен кружокĕнчи 11 çынтан 5 йулташ хамăр тĕллĕн вĕренме, 6-шĕ кружокрах вĕренме (3—4 классенче вĕрентекенсем) йалти коммуниссемпе комсомолĕцсем 3-шĕ хăйсен тĕллĕн, виçĕшĕ кружока пуçтарăнса вĕренме килĕшрĕç.

Коммуниссенчен нумайĕшĕ:

— Епĕр çине тăрсах тытăнсан „ПСК(б)П Историне" вуласа ăнланма пултаратпăр. Паллах, пулăшу кирлĕ, ăнланманнисене ăнлантарма консультаци кирлĕ, теççĕ.

П. Д. Данилăв.

Колхозсенче тупăшсене тĕрĕс валеçессишĕн

ИШЛЕЙ. Тупăшсене тĕрĕс тата вăхăтра колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе пани, вăл ĕçкунĕн авторитетне хăпартаť, колхозра тÿрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлекен кашни колхозникпе колхозницăн хастарлăхне ÿстерет. Çавăнпа та, колхозри тупăшсене валеçсе парас ĕçре партипе совет тата çĕр-ĕç органĕсем йенчен конкретлă йертсе пыни кирлĕ.

Анчах, Ишлей районĕнчи нумай колхозсенче тупăшсене валеçесси çине çийелтен, пĕчĕк ĕç вырăнне хурса пăхаççĕ. Декабĕрĕн 3-мĕшне 111 колхозран 12 колхоз çеç тупăшсене валеçмели ведăмăççене районри çĕрĕç пайне пырса çирĕплетнĕ. Чылай колхозсенче халĕ те авăн çапса пĕтермен. „Алино" колхозĕ нойабĕр уйăхĕн малтанхи кунĕсенчех авăн çапса пуçтарнă пулин те, тупăшсене валеçмели ведăмăçе тума тытăнман. Колхоз халиччененех государствă умĕнчи обйазатĕлствăсене тултарман. çĕрулми, кантăр сÿсĕ, клевĕр вăрри, государствăран ссудă илнĕ клевĕр вăррине парса татман. Çав вăхăтрах колхоз тырри-пуллине правлени членĕсем колхозниксенчен ыйтмасăрах, хăйсем пĕлнĕ пек сатма тытăннă. Сăмахран, ийулĕн 10-мĕшĕнче правлени ларăвĕнче строителствăра ĕçлекенсене ĕçкунĕ панисĕр пуçне, 55 пăт тырă памала тунă. Правлени членĕсемех колхозра тухакан расхудсене витме тесе, ĕçкунĕ тăрăх валеçмели тырпулран 100 пăт ытларах ыраш сутнă.

Йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставĕ колхозри пур ĕçсене те колхоз членĕсене хăйсене туса пыма хушаť. Анчах, ĕçе тĕрĕс организацилеме пĕлмен колхозсенче ĕç вăйне тара тытса ĕçлеттеринипе колхозниксен ĕçкунне йÿнететçĕ. „Алино" колхозĕнчех, шоферта хăйсен колхозникех ĕçлет, ăна тара тытса ĕçлеттернĕ çын пек шутласа тÿлеççĕ. Çак колхозрах тимрĕç ĕçне пĕлекен колхозниксем виç-тăватă çын пур. Апла пулин те, колхозра йутран тытнă тимĕрçсем 2 çын ĕçлеççĕ. Договăр тăрăх, вĕсене колхоз кашни уйăхра 100 тенкĕ укçа, 15 пăт тыра, 10 пăт çĕрулми тÿлесе тăраť, вĕсен выльăххисене колхозран тăрантарса усраççĕ.

Районри ĕçтăвакан комитетпа çĕрĕç пайĕ колхозсенче приходпа расход сметине мĕнле пурнăçласа пынипе пачах интересленмен, çулталăк хушшинче пĕр хут та тĕрĕслени пулман. Çав хушăрах, чылай колхозсенче приходпа расход сметипе пăхнинчен ытларах расход калараççĕ. Акă „Тиуш" колхозра приходпа-расход сметине йышăннă чухне кăçал колхозăн 37 867 тенкĕ приход пулмала пулнă, тĕрĕссипе 15 382 тенкĕ çеç пурнăçа кĕртнĕ. Çак укçаранах правлени 15 263 тенкĕ расходланă. Кунсăр пуçне, колхоз государствăна ссудă илнĕ укçана 6 пин тенкĕ таварса памала, автомашинă йусаттарнăшăн 3 пин тенкĕ тÿлемеле. Çавăн пекех „Алино" колхозĕнче те, правлени председателĕ Алферăв йулташ хăй ирĕкĕпе колхоз укçи-тенкине ытлашши салатнипе хальтимĕрç вальли кăмрăк илме те укçа çук.

Йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставĕ тăрăх, колхозсенчи ревизи комиççисен çулталăк хушшинче колхозра тăватă хут ревизи туса иртермеле. Кашни ревизи хыççăн акт çырса ăна колхозниксен аслă пухăвĕнче çирĕплетмеле. Çак пункта та нумай чухне пурнăçа кĕртмеççĕ. Ревизи комиççисем хăйсен ĕçĕсене тÿррĕн тата вăхăтра туса пыманнине пулах хăшпĕр колхозсенче йалхуçалăх ертелĕн уставне хирĕçле ĕçсем пулса пыраççĕ. Мамга йалсоветĕнчи „Алгаш" колхозра ревизи комиççийĕ пачах çук. „Авдан" колхозри ревизи комиççийĕ çулталăк хушшинче те пĕр хут çеç ревизи тунă.

Чылай колхозсенче колхозниксем ĕçлесе илекен ĕçкунĕсене ĕçкĕнекисем çине лартса пымаççĕ. „Авдан" колхозри иккĕмĕш бригадăра колхозниксен 1938 çулхи ĕçкунĕсене ĕçкĕнекисем çине пачах лартса паман. Колхозниксенчен нумайĕшĕ 1938 çулта миçе ĕçкунĕ ĕçлесе илнине пĕлмеççĕ. „Авдан" колхозра икĕ уйăх ытла ĕнтĕ председателĕ çук. Вăрлăхлăх тесе икĕ гектар çине хăварнă клевĕре пуçтарса кĕртменнипе уйăх йулнă. 7 гектар çинчен пуçтарса кĕнĕ вăрлăхлăх викăна итем çинчех çĕртсе йанă. Çак колхозрах тырăна аланă чухне йулакан кайăш тыррине шута илмесĕрех салатса пĕтернĕ.

Колхозри тупăшсене валеçме хатĕрленнĕ чухне, йалхуçалăх ертелĕн уставне хирĕçле ĕçсене пĕтĕмпех пĕтерме тăрăшмала. Колхозсенчи ревизи комиççисен тупăшсене пĕтĕмпех йалхуçалăх ертелĕн Сталинла уставĕ тăрăх валеçсе панине, йалхуçалăх продуктисене тата укçа-тенкĕне шутсăр салатса, çаратса пĕтересрен асăрхаса тăмала. Колхозникăн тÿрĕ кăмăлпа ĕçлесе илнĕ пĕр ĕçкунĕ те шута илмесĕр йулмала мар, çав вăхăтрах пĕр ĕçкунĕ те ытлашши шутласа пани ан пултăр. Районри партипе совет органĕсен колхозри тупăшсене валеçес ĕçе контроллесе тăрассине тата ку ĕçре йертсе пырассине хăйсен аллине илмеле. Колхозсен государствă умĕнчи пур обйазателствăсене те тултарса декабĕр уйăхĕ вĕçнеле пур колхозсенче те тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх колхозниксене валеçсе парассишĕн кĕрешес пулаť.

А. Григорйĕв.

Лекцисем ирттерме тытăнчĕ

Йетĕрнери парткабинет ПСК(б)П историне вĕренекенсене пулăшас майпа лекцисем ирттерме тытăнчĕ. Декабĕрĕн 2-мĕшĕнче кĕнекепе харпăрхăй тĕллĕн мĕнле ĕçлемели çинчен И. В. Некрасăв йулташ лекци туса пачĕ. Лекци итлеме 52 çын пынă.

Н. Корĕв.

Устава пăхăнмала

Анат Карачура (Вăрнар р.) йалĕнчи колхоз организациленĕренпе чылай пысăк çитĕнÿсем тунă. Анчах, колхоза йертсе пыракансем—колхоз председателĕ, бригадирсем, фермă пуçлăхĕсем час-часах улшăнса тăни колхоза çитĕнÿсем тума чăрмантарни сисĕнет. Колхоз пуçланнăранпа колхоз председателĕ 11 çынна, счетовод 9 çынна, бригадир 12 çынна, фермă пуçлăхĕ 9 çынна çитнĕ. Коньухсене 28 хут, ĕне сăвакансене 18 хут кăларса улăштарнă.

Çакна пула тума тытăннă ĕçсем кайа йулса пыраççĕ. Вите тума пуçлани 3 çул çитет, кăçал та туса çитереймерĕç. 10 гектар çинчи сата тирпейлĕ пăхман пирки, йăвăçсене выльăхсем кăшласа йанă. Колхоз иртнĕ çултах государствăран сат карти тытма тесе 500 тенкĕ укçа илнĕ. Картине тытман, укçине урăх çĕре салатса йанă.

Колхозра учотпа отчот ĕçĕсене йапăхтарнă. Колхозниксен ĕçкунĕсене бригадирсем ĕçкĕнекисем çине вăхăтра лартса пымаççĕ.

Бригадăсенче ĕçе тĕплĕн туман пирки улăм капанĕсене шыв кайнă, улăм çĕрнĕ. Выльăх апачĕ кăçал хĕсĕкрех пулсан та, тирпейлĕ тыткалани çук.

Çапла, Анат Карачура колхозĕнче колхоз пурлăхĕ çинĕ тирпейсĕр пăхни, йалхуçалăх ертелĕн Сталинла уставне пăсни палăраť. Колхоз пур ĕçре те малта пыма пултараť. Кун пек пулас тесен, устава пăхăнса ĕçлени, колхозниксем хушшинчи дисциплинăна лайăхлатни кирлĕ. Çавнашкалах районри организацисен Анат Карачура колхозне кулленхи ĕçре пулăшса пымала.

В. Белов.

Йалхуçалăх ертелĕн уставĕ—çирĕп саккун

Йалхуçалăх ертелĕн Сталинла уставĕ тăрăх, колхозсенчи бригадирсен ернерен сайра мар ертелĕн кашни членĕ тунă ĕçсене шутласа памала, йышăннă ĕç хакĕсем тăрăх миçе ĕçкунĕ тунине колхозникĕн ĕçкĕнеки çине çырса пымала. Анчах çакна хăшпĕр колхозсенче пăхăнмаççĕ. Акă, Мартынкăри (Трак р.) „Хĕрлĕ хĕвелтухăç" колхозри тăваттăмĕш бригадăн бригадирĕ Афанаçйĕв колхозниксен ĕçкунĕсене çуракинчен вара ĕçкĕнекисем çине çырса паман. Иккĕмĕш бригадăн бригадирĕ 3 уйăх хушши ĕнтĕ ĕçкунĕсене шутласа, çырса паман.

Бригадирсем çакăн пек ĕçленĕ пирки колхозра йалхуçалăх ĕçĕсем йулса пыраççĕ. Ку вăхăтчченех колхозра авăн çапса пĕтермен. Государствăна çĕрулми, аш-какай тата ыттисене те парса татман.

Йалхуçалăх ертелĕн уставне пăсма никама та ирĕк паман. Устав пур колхозниксемшĕн те саккун пулса тăраť, ăна çирĕп пăхăнмала.

Колхозник.

Ытлашши тырра—государствăна

** ÇĔРПӲ. Паваркассинчи „Хĕрлĕ Павари" колхоз государствăна 170 центнĕр тырă сутма йалти кооперативпа договăр турĕ.

Тырă сутнă укçапа тĕрлĕрен йалхуçалăх машинĕсем илме пулчĕç.

В. Андрейĕв.

** ИШЛЕЙ. Хăймалакасси çывăхĕнчи колхозсем, кашнийех хăйсенчен ытлашши тырăна государствăна сутма пуçларĕç. Халĕ „Тĕрĕс çул" колхоз 15 центнĕр, „Алино" колхоз 20 центнĕр сутрĕç.

Г. Ошмань.

** ШĂХАСАН. Лаťшури „Çамрăк колхозник" колхоз кооперациурла государствăна 165 центнĕр тырă сутрĕ. Тырă сутас ĕçре комсомолĕцсем тăрăшса ĕçлерĕç.

С. Герасимăв.

Халăх переписĕ умĕн

КУСЛАВККА. Çатрăк йалсоветне кĕрекен йалсенче учитĕлсем пухусенче пулас перепис çинчен докладсем туса параççĕ, час-часах каласусем ирттереççĕ.

Шкулта вечăрсем пулса иртрĕç. Унта Пĕтĕм Союзри халăх переписне хатĕрленнĕ май тумали ĕçсем çинчен докладсем итленĕ.

Йалсоветри инструктăр-контрольор Йефимăв йулташ счотчиксемпе инструктивлă канашлу ирттерчĕ. Вĕсем умĕнче мĕнле ĕçсем тăни çинчен ăнлантарса пачĕ. Йалсовет çумĕнче халăх переписĕн кĕтесĕ уçнă. Унта перепис ирттермели бланкăсен формисем тата ыттисем те пур.

К. Шенйе.

МĂН-СĔНТĔР. Тутаркас районĕнче переписре ĕçлемели кадрсене тупса çитерчĕç. Райĕçтăвком президиумĕнче инструктăр-контрольорсем пулма 23 çын, счотчиксем пулма 100 çын çирĕплетнĕ. Вĕсенчен коммунисссемпе комсомолĕцсем 51 çын, Верховнăй Советсен суйлав кампани вăхăтĕнче суйлав комиççи членĕсем тата агитатăрсемпе доверĕннăйсем пулнисем 98 çын.

Переписре ĕçлеме хутшăнтарнисен шутĕнче учитĕлсем те нумай.

П. Йаркуньки н.

* * *

Перепис участкинчи инструктăр-контрольор пулма сĕннине хаваслӑн йышăнтăм. Епĕ ман умра пиртĕ ответлă тата хисеплĕ ĕç тăнине лайăх пĕлетĕп. Çавăнпа та пулас переписре мĕнле ĕçлемелине вĕренсе пыратăп.

Нойабĕр уйăхĕнче епĕр 16 çын инструктăр-контрольорсен курсĕнчен вĕренсе тухрăмăр. Курсран вĕренсе тухнă хыççăн пулас перепис çинчен рабочисемпе служăщисене ăнлантарса пама тытăнтăмăр.

И. Дерйугин.

Шупашкар хули.

Чукунçул строителствинче

Икĕ бригадăн ăмăртăвĕ

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствин Шупашкар станцинче ĕçлекенсем Сталинла Конституци тăрăх ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйлани пĕр çулталăк тултаракан куна ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартнипе кĕтсе илеççĕ.

Колбасăв йулташ йертсе пыракан бригадă хăй çине декабĕрĕн 12-мĕшĕчен 878 метр тăршшĕ линихывса виçĕ стрелкă лартма обйазателствă илсе, Фомин йулташ бригадине ăмăртăва чĕнчĕ. Халĕ икĕ бригади те кулленхи плана ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Акă, Колбасăв йулташ бригади декабĕрĕн 6-мĕшĕнче плана 110 процент 7-мĕшĕнче — 116 процент тултарнă.

Уйрăм рабочисем тата лайăхрах ĕçлеççĕ. Йевдокимăв, Феодăрăв, Феофанăв, Богатырйов йулташсем нормăна йалан 120—150 процентран кайа мар тултараççĕ.

Анчах çакна каламала: бригадăсене ĕçлеме материалсем (шпалсем, костыльсем) çителĕксĕр. Çавна пула час-часах простой пулаť. Çитменне тата Колбасăв бригадине декабĕр уйăхĕшĕн нарйад паман.

Стахановĕц Р. Йемельйанăв.

Производствăри маçтăрсем

Таварнăй пойăс Канаш станцинчен Мусакавала тапранса кайрĕ. Çитмĕл вакун ытла. Вĕр-çĕнĕ вакунсем ирте-ирте кайаççĕ. Вĕсем çине „Канаш ВРЗ, 25—XI—38" тесе шурă сăрпа çырса тухнă.

Вăл вакунсем çине пăхсан, вĕсене кивĕ вакунсенчен йусаса тунă тесе никам та калас çук. Çĕнĕрен туса кăларнă пекех тулăнаť. Анчах вĕсене çĕмрĕк вакунсенчен йусаса тунă. Акă, вакунсем йусакан савăт килкартинче çĕмрĕк вакунсем нумай тăраççĕ. Вĕсем те часах çĕнелеççĕ.

Вакунсем йусакан савăт кĕрлесе кăна тăраť. Кунти шавлă сасă ниçене илтĕнет. Епĕр слесăрсем ĕçлекен цеха кĕрсе кайрăмăр. Цех тимĕр сасси йантранипе тулнă.

Слесăрсем патĕнче дежурнăй инженер Никифăр Йакăвлĕвич Цыганов çÿрет. Вăл чăваш, унăн патĕнче ĕçлекенсем те пурте пекех чăваш ачисем. Инженер Цыганов рабочисем патне пырса пăхаť, вĕсен ĕçри йăнăшĕсене кăтартса параť. Инженера рабочисем тимлĕн итлеççĕ. Вăл кăтартса панă йăнăшсене хăвăрттăн тÿрлететçĕ.

Вакунсем йусакан савăтра ĕнер колхозра стахановĕцсем, ударниксем пулнă çамрăксем ĕçлеççĕ. Инженер Цыганов йулташ та ĕнерхи колхозник.

— 1938 çулăн йулăшки уйăхĕ пуçланчĕ, хăвăртрах ĕçлесе производствă планне тултарас пулаť,— тет слесăр Арçентйĕв йулташ.

Цехра стахановла йухăм сарăлнă çемĕн сарăлса пыраť. Дйакăвпа Владимирăв йулташсем станоксене нимĕнле аварисемсĕр, пĕр чăрăнусемсĕр ĕçлеттерме пуçланă. Ĕç планне 170 процент таран пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Таварлă комбинатра Захар Степанăв йулташ савăт пуçланнăранпах ĕçлет. Вăл 67 çулта. Анчах çамрăксенчен йулмасť. Производствă планне йаланах тултарса пыраť. Халĕ Степанăв йулташ инструментсен аврисене (сава аврисем, мăлатуксемпе пуртăсен аврисене т. ыт. те) лартнă çĕрте ĕçлет. Нормăна 173 процентран пуçласа 200 процент таран тултарса пыраť.

Савăта колхоз çамрăкĕсем йуратаççĕ. 1936 çулта Хĕрлĕ Çара кайнă çамрăксем кăçал Хĕрлĕ Çартан таврăнсан калллех кунта ĕçлеме килнĕ. Слесăр Роман Федăрăв, електросварщик Федăр Шашков йулташсем Хĕрлĕ Çара савăтран кайнă, ĕçлеме те унтах килнĕ. Вĕсем Хĕрлĕ Çарта чухне те савăтра ĕçлекен çамрăксемпе йалан çыхăну тытса тăнă. Савăт пурнăçĕпе йаланах интересленнĕ.

Вакунсем йусакан савăтра ĕнерхи колхозниксем—пайан производствă маçтăрĕсем пулса çитнĕ çынсем темĕн чухлех.

В. Цыпленков.

Макарон хăпрăкĕнчи çитменлĕхсем

Шупашкарти макарон хăпрăк директăрĕ пулнă М. Данилăв хăпрăк хуçалăхне йапăхтарса пынă пулнă. Кăçал акă ремонт хыççăн електромотор çунса кайнă, аварисем пулнă.

Хăпрăк дирекцийĕ тата хăпрăкри организацисем çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе йапăх ĕçлесе пыраççĕ. Рабочисене вальли производствăра стахановла ĕçлеме, çавăн пекех ĕç хыççăн канма кирлĕ условисене туман. Общежитисенче таса мар, тăвăр, выртса тăмали хатĕрсем, сĕтел-пукансем çителĕксĕр. Апат-çимĕç пĕçерме те майсем çук. Чылай вăхăт хушши ĕнтĕ общежитинче пурăнакансене вĕри шыв памаççĕ.

Культмассăлă ĕç те çав тери йапăх. Рабочисем хушшинче вĕсене интересленекен ыйтусем тăрăх каласусем туса ирттермеççĕ. Хăпрăкăн клуб та, хĕрлĕ кĕтес те çук.

Партипе комсомол организацисен çак çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тимлĕрех ĕçлемеле.

Н. Петров.

Наçхи вăтам шкул

Шăхасанти вăтам шкул çумĕнче каçхи вăтам шкул ĕçлет. Унта 22 çын вĕренет. Вăл шкулта çывăхри йалсенчен те çÿреççĕ.

Г. И.

Йапонин хĕçпăшаллă вăйĕсем

Йапонин хĕçпăшаллă вăйĕсен историйĕ Йапони империализмĕ йут çĕршывсене туртса илме хапсăвнине пит те уççăн кăтартса параканни пулса тăраť.

Йапонин вăрçă вальли кайакан расхочĕсем йаланах государствă бÿджечĕн расход пайĕн пысăк пайне йышăнса тăнă. Йапонин финансĕ йаланах йăвăрлăх тÿснине пăхмасăр тата ĕççынни массисен пурнăç условийĕсем начаррине пăхмасăр, Йапони правителстви çара тытса тăма ĕçхалăхĕнчен нумай укçа-тенкĕ сăптăрса илес тĕлĕшпе йаланах чи татăклă ĕçсем туса пынă. Хальхи вăхăтра Китайра пыракан вăрçăччененех те вăрçă ĕçне кайакан расходсем Йапонин пĕтĕм наци бÿджедĕнче 50 процент шутланнă. Çав средствăсене займсем кăларнипе тата налогсене ÿстернипе пекех тупнă.

Вăрçă пуçлансан Йапонин вăрçă расхочĕсем халиччен пулманла ÿссе кайнă. Китайри вăрçă вальли тата метрополирипе Манчжурири çарсене тытса тăма 1937 çултан пуçласа 1938 çулти март уйăхне çитиччен 9,5 мĕлйард иена йахăн панă, çав вăхăтрах Йапонин нацилĕ дохочĕ 12—14 мĕлйард иен кăна шутланаť. Китайри вăрçă тата вăрçăна хутшăнман çар чаçĕсене тытса тăма Йапонине кунсеренех 34 мĕлйун иена лараť.

1930—1932 çулсенчех те Йапони çарĕ нумай тĕлĕщĕнчен ытти капиталисăмлă çĕршывсен çарĕсенчен кайра тăнă. 1937 çул тĕлне вăл Германипе Франци çарĕсемпе танлашасси патне çывхарнă. Йулашки çулсенче Йапони вăрçă промышлĕнниçне реконструкциленĕ, вăрçă хатĕрĕсем туса кăларакан çĕнĕ производствăсем чылай тунă, çапла вара, çар техникине çĕнетсе улăштармали базă туса хатĕрленĕ. Çар вальли пулеметсем, артиллери, мотомеханизациленĕ средствăсем тата авиаци парассине тĕп вырăна хунă. Çак ĕçре Йапони çарĕ ытти капиталисăмлă çĕршывсен, уйрăмах ытла Германин, техникăлă пулăшăвĕпе тата консультацийĕпе сарлакан усă курнă.

* * *

Китайа хирĕç вăрçăпа тухаччен (1937 çулти ийуль уйăхчен) Йапони çарĕ 17 çуран çар дивизийĕсенчен, темиçе охранăлă бригадăсенчен, тăватă уйрăм кавалери бригадисенчен, 30 полка йахăн горнăй, йăвăр (крепăçлă), полевой йăвăр тата зенитлă артиллерирен, мономеханизациленĕ темиçе бригадăран, танклă икĕ полкран тата 18 авиаци полкĕнчен тăнă. Вăрçăччен çарăн пĕтĕм хисепĕ 380 пин çынна çитнĕ. Йапонин территорилĕ типĕ çĕр çинчи çарĕсене çапла вырнаçтарса тухнă: метрополире—162 пин салтак, Манчжурире—160 пин, Корейăра—40 пин, Çурçĕр Китайра—18 пин салтак.

Айалта илсе кăтартнă таблицă Йапони дивизийĕ пулеметсемпе орудисемпе мĕнле хĕçпăшалланнине уççăн кăтартса параť.

Пĕр дивизи мĕнле хĕçпăшалланнине кăтартса паракан цифăрсем

	Германи	Польшă	Итали	Румыни	Йапони	Китай
Çăмăл пулеметсем	300	210	162	162	320	60
Йăвăр пулеметсем	108	117	129	115	144	20
Танксене хирĕç пемели орудисем	72	18	22	6	24	2
Çăмăл полевой орудисем	36	36	48	36	36	12

Йут çĕршывсенчи пичет Китайри вăрçăн иккĕмĕш çулĕ тĕлне Йапони çарĕн хисепĕ çинчен пачах тĕрĕс мар сведĕнисем параť. Анчах кăштах та пулин тĕрĕссине кăтартса паракан хисепе çакна шутлама пулаť, ăна Англи, Америка тата Франци пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх тунă:

Йапони çарĕ 1938 çулти ийулĕн 1-мĕшне мĕнле тăни

Çынсем	2 000 000 йахăн *)
Артиллери орудийĕсем	5 000
Танксем	2 000
Самольотсем (типĕ çĕр тата тинĕс çинче çÿрекеннисем)	3.000
Çуран çар дивизийĕсем	45

*) Çар учрежденийĕсене те кĕртсен.

Çавăн пекех çар йĕрта тăни те нумай улшăннă. Йапони çарĕн тĕп вăйĕсем Китайра тата Манчжурире тăраççĕ.

* * *

Паллă, Йапонин Манчжурири тата Корейăри çарĕсенчен Квантун тата Корейă çарĕсене туса хунă. Йапони империализмĕн ССР Союзне тата Монголи халăх республикине хирĕç вăрçăпа тухмали агрессивлă планĕсенче çак çарсем иккĕшĕ те малти отрйад пулмала.

Квантун çарĕ тенине 1931 çулта Йапони Манчжурине оккупациленĕ хыççăн йĕркеленĕ. Пĕтĕм Манчжури Квантун çарĕн штабĕ ури айĕнче тăраť. Çичĕ çул хушшинче (оккупаци тунăран вара) Манчжурине çар лагерĕ туса хунă. Йапони вăйеншчини Манчжурири чукунçула 5 пин километр тăршшĕ ÿстернĕ. Манчжури порчĕсене улăштарса çĕнетнĕ, вĕсен таварсем тийессине тата пушатассине аслăлатнă. Наступлени характерлă çар обйекчĕсем пит нумай тунă. Пĕр сăмахпа каласан, войеншчинăн Манчжурири мĕнпур ĕçĕсен тĕллевĕ — ССР Союзне хирĕç вăрçăпа тухма Йапони вальли базă хатĕрлесси пулаť.

Йапонин хальхи вăхăтри çарĕн пĕтĕм составĕнчен 30 проценчĕ Манчжурипе Корейăра шутланаť, кунти çарсем Йапонин ытти çарĕсенчен лайăх хĕçпăшалланнă тата лайăх хатĕрленнĕ. Квантун çарĕсĕр пуçне Йапони Манчжурире „Манчжоу-Го" тенĕ çара тытса тăраť, унăн хисепĕ 50 пин çынтан иртет. Ку çарăн тĕп ĕçĕ Йапони оккупанчĕсен тылĕнче партизанла йухăмпа кĕрешесси пулаť; анчах çакăн пек те пулма пултараť: унăн пĕр пайĕпе Йапонин Совет Союзне хирĕç вăрçăпа тухсан усă курма пултараççĕ.

Йапонин суйласа илнĕ çарĕсене Хасан патĕнче çĕмĕрсе, аркатса тăкнă хыççăн, Йапони генералĕсем хыттăнах аптраса ÿкнĕ. Йапони войеншчини хăйĕн выступленийĕсенче Квантун тата Корейă çарĕсемпе кăмăлсăр пулнине час-часах кăтартса параť, мĕншĕн тесен вĕсем Хĕрлĕ Çар чаçĕсене хирĕç тăрса вăрçма пултарайман. Çапăçусенче пулнă участниксенчен пĕри, Йапони полкне йертсе пынă аскер, çапла çыраť: „Совет войскисем, вĕсем пирĕн тăшман пулин те, анчах тивĕçлипе хаклас пулаť: вĕсем харсăррăн çапăçаççĕ, уйрăмах совет çуран çарĕсен ĕçĕсем харсăр".

* * *

Йапонин Китайри çарĕсен ĕçĕсене хак парса, çакна палăртма кирлĕ: йапонĕцсем техникă тĕлĕшĕнчен китайĕцсенчен маларах тăраççĕ пулин те, вĕсене Китай çĕрĕн кашни татăкне пысăк йăвăрлăхсемпе тата пысăк çухатусемпе çапăçса илме лекет. Начар хĕçпăшалланнă Китай çарĕ Йапони çарне пĕр хут кăна мар çапса тăкнă, халĕ те çаплах çапса тăкса пыраť. Йапонĕцсене инкекрен çăлăнса тухма авиаципе бронетанкăлă средствăсем пулăшаççĕ. Йапонĕцсем пĕр вăхăтрах вăрçăн мĕнпур средствисене, — вăл шута ОВ та (вĕлерекен газсем) кĕрет, — хута йарсан тин китайĕцсем айаккала пăрăнаççĕ. Анчах ĕç хире-хирĕç тытăçса çапăçасси патнех çитсен, вара „хăйулă та паттăр" самурайсем кайала тарма тытăнаççĕ.

Китайри вăрçăн опытĕнчен çакнашкал вывăд тума пулаť: Йапони çарĕ техникăлă средствисем тĕлĕшĕнчен хăйпе пĕртан (унтан та ытларах хăйĕнчен малта тăракан) тăшманпа тытăçăва кĕрсе кайсан, вара самурайсен „никам çĕнтерейми" çарне пуçĕпех çапса аркатаççĕ.

* * *

Китайри вăрçă стратегипе тактикă тĕлĕшĕнчен Йапони çарĕн пысăк çитменлĕхĕсене кăтартса пачĕ. Анчах унăн вăйсăр йенĕ çакăнта çеç мар-ха — Йапони войеншчинишĕн питех те хăрушши çакă пулмасť-ши—çарăн личнăй составĕн моральлĕ çирĕплĕхĕ арканма пуçланă.

Ĕлĕк Йапони генералĕсем: бойевой тата моральлĕ-политикăлă пахалăх йенчен Йапони салтакĕпе танлашаканни урăх тĕнчере ниçта та çук, тесе мухтанчăклăн ĕнентерсе калаťчĕç. Йапонин çар министерствин çар брошÿринче 1935 çулта çапла каласа çырнă пулнă: „Пирĕн салтак кирек мĕнле хăрушă ĕçе те тума хатĕр, вăл çапăçури вилĕм—кайăк тĕкĕнчен те çăмăлраххине, унăн обйазăннăçĕсем—тимĕр сăрт-туран та йăвăртараххине ăнланса илет". Халĕ ĕнтĕ Йапони империализмĕ кайăк тĕкĕпе тимĕр сăрт-тусем çинчен çирĕплетсе калани ытлашши ÿстерсе калани пулнине курса пĕлме пултараť.

Социальнăй состав тĕлĕшĕнчен Йапони çарĕн ытларахăшĕ—хресченсенчен тăракан çар. Йапонири ĕççынни массисен пурнăç условийĕсем питех те йăвăррине шута илсен, салтаксем çар службине мĕнле шухăш-кăмăлсемпе пынине тавçăрса илме пулаť. Çавăнпа та тĕлĕнмели çук, салтаксем самурайсен мораль кодекси вĕрентни

Йулашки 4-мĕш страницăра

Шкулсенче хĕллехи каникулсене иртересси çинчен

ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕ 1938—39-мĕш вĕренÿ çулĕнче хĕллехи каникулсене иртересси çинчен постановлени йышăнчĕ.

ПСÇЛКС Тĕпкомĕ обкомсене, крайкомсене, нацилĕ республикăсенчи комсомолăн Тĕпкомĕсене, хула комитечĕсене, райкомсене, комсомолăн пуçламĕш организацисене хĕллехи каникулсене тĕплĕн хатĕрлеме, çапла туниле вĕренекенсене сывлăхлă та кулътурăлă кану памала тума хушнă.

Комсомол организацийĕсен çутĕç оргăнĕсемпе, профсоюз организацисемпе, физкулътурăпа спорт комитечĕсемпе, Осоавиахим совечĕсемпе, вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсемпе пĕрле хĕллехи каникулсен вăхăтĕнче çĕнĕ çул йолкисем, ачасен массăлă уйавĕсем, вĕренекенсемпе хамăр çĕршывri паллă çынсем, ССРС, РСФСР тата автономлă республикăсен Верховнăй Совет депутачĕсем, орденоносĕцсем, Совет Сойуз Геройĕсем, Хĕрлĕ Çар командирĕсем, наукă, искусствă, спорт маçтăрĕсĕм хушшинче тĕлпулусем организацилемеле.

Кашни шкулта вĕренекенсен художĕствăлă пултарулăхне кăтартассине организацилемеле, аслă класенче вĕренекенсем валъçи маскарадсем, вечĕрсем тумала, октябрйатсем валъçи утренниксем, çавăн пекех тата йĕлтĕрсемпе, конъкисемпе чупма ăмăртусем, екскурсисем, прогулкăсем, çар вăййисемпе походсем тумала.

ПСÇЛКС Тĕпкомĕ комсомол организацисене уйрăмăнах хĕллехи каникулсем вăхăтĕнче ача çурчĕсенче пуранакан ачасем хушшинче ĕçлеме кирли çине кăтартса панă.

(ТАСС).

Хроникă

▪▪ Н. И. Йежов йулташа, вăл хăй ыйтниле, Шалти ĕçсен Халăх Комиссарĕн ĕçĕсенчен хăтарнă, ăна Шывçул транспăрт Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме хăварнă.

▪▪ ССРС Шалти ĕçсен Халăх Комиссарĕ пулма Л. П. Берийа йулташа çирĕплетнĕ.

Писатĕлсен сойузĕн çекци пухăвĕсем

Чăваш совет писатĕлĕсен сойузĕнче декабĕрĕн 10-мĕшĕнче прозаиксен çекцийĕн, декабĕрĕн 11-мĕшĕнче поетсен çекцийĕн пухăвĕсем пулаççĕ. Пухусене пур писатĕлсемпе поетсене, литкружок членĕсене те чĕнеççĕ.

Пухусем пичет çуртĕнче каçхине 6 сехетре пуçланаççĕ.

Парткомăн штатра тăман инструктăрĕсем

Мускаври Сталин йачĕпе тăракан автомобил савăчĕ çумĕнчи партком организацилĕ-партилĕ ыйтусем тăрăх ĕçлеме штатра тăман инструктăрсен институчĕ тунă. Инструктăрсем пулма парторганизацинчи 16 активиста çирĕплетнĕ. Вĕсенчен нумайăшĕн парти ĕçĕнчи опытсем пур.

Штатра тăман инструктăрсем пысăк ĕçсем тăваççĕ.

Инструктăр—цех маçтăрĕ Кузнецов йулташ парткомлаrăвне тăратма прес цехĕнче парти хуçалăхĕ мĕнле тăни çинчен тĕплĕ материал хатĕрленĕ. Зверĕв йулташ çак ыйту тăрăхах ĕçсем механо-сборочнăй цехра мĕнле тăни çинчен материалсем тăратнă. Мамайĕв йулташ партине илесси çинчен материалсем хатĕрлет. Комаров, Зверĕв, Акимăв йулташсем парти организацисене парти пухăвне ыйтусем хатĕрлеме пулăшаççĕ.

Партком штатра тăман инструктăрсене час-часах пухать, вĕсемпе канашлать, партком ĕçĕн планĕсемпе, партин аслăрах оргăнĕсен решенийĕсемпе паллаштарать.

(ТАСС).

— о —

Колхозри тулли пурнăç

Новосибирск облаçĕнчи Купин районĕнчи колхозсем кăçал тырпул вăйлă туса илнĕ. Ватамран районĕпе гектартан 16-шар центнĕр тырă илнĕ. Уйрăм колхозсенче стахановла участкăсем çинчен гектар пуçне 44-шар центнĕр илнĕ. Пĕр колхозра 10 гектар çинчен 700 центнĕр ытла тыра пуçтарса кĕртнĕ.

Колхозниксем ĕçкунĕ тăрăх тырă та, укçа та нумай илеççĕ. Районра ĕçкунĕ пуçне 18 килограмран кайа тыра паракан пĕр колхоз та çук. „Красный Сибиряк" тата Ворошилăв йачĕпе тăракан колхозсенче ĕçкунĕ пуçне 22 килограмран пуçласа 35 килограм таран тыра тивет.

„Красный флаг" ертелри колхозник Квашин 300 центнĕр, Буденный йачĕпе тăракан ертелри колхозник Полоскин 240 центнĕр тыра тата 5.170 тенкĕ укçа илнĕ.

(ТАСС).

Америкăри митингсем

Нъу-Йоркра „Германипе Америкă хушшинчи кулътура ĕçĕсен лиги" пуçарниле, Германире йеврейсене хирĕç погромсем тунине протеслесе митинг пулнă. Митингра тухса калаканĕсем Германие таварсем йарассине чарма ыйтнă. Митингра, çавăн пекех тата, Германирен тарса кайнă паллă нимĕç писатĕлĕ Томас Манн тухса каланă. Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче фашисла погромщиксен варвăрла ĕçĕсене хирĕçсе халĕ те митингсем пулаççĕ. (ТАСС).

Халăх творчĕствин ÿсĕмĕ

Пирĕн республикăра халăхăн художĕствăлă творчĕстви çулран çул ÿссе пырать. Пайанхи куна республикăри колхозсемпе предприйатисенче художĕствăлă пултарулăх кружокĕсем 1000 йахăн шутланаççĕ. Вăл шутран драмкружоксем—380, музыкăпа хор кружокĕсем—400, духовой оркестрсем—11, спорт, литература кружокĕсем çĕршерĕн шутланаççĕ. Çав художĕствăлă пултарулăх кружокĕсене пĕтĕмпе 20 000 çынна йахăн йавăçтарнă, харпăрхăй пултарулăхĕн кружокĕсем хăйсен творчĕствине кунран кун ÿстерсе пыраççĕ, вĕсем лайăхрах ĕçлеме тытăнчĕç.

Тăвай районĕнчи Тăрмăшри драмкружок республикăри драмкружоксенчен чи лайăх ĕçлекенни пулса тăрать. Кунта пйесăсене аван хатĕрленсе суфлорсăрах лартса параççĕ. Кружок членĕсем йаланах занятисем туса актор маçтăрлăхне вĕренеççĕ. Кружока коммунис Белков йулташ йертсе пырать.

Çавăн пекех Сĕнтĕрвăрри районĕнче Кĕçĕн Маклашкинăри Тогайĕв йулташ йертсе пыракан колхоз хорĕ те республикăшăн паллă пулса тăчĕ. Ку хор йурăсене нотăсем тăрăх вĕренсе аван йурласа парать. Хор вырăнсенче концертсем панисĕр пуçне Шупашкара килсе радио урлă концертсем панă. Хорта йурлакансен йатарла хатĕрленĕ костюмсем пур. Кун пек аван ĕçлекен кружоксем республикăра татах та нумай. Йанăмри шăвлă оркестра, Иванăвăри колхоз хорне те лайăх ĕçлекенсен йышне кĕртме йурать.

Художĕствăлă пултарулăх кружокĕсемсĕр пуçне республикăра талантла йурăçăсем, музыкантсем 1.500 çын шутланаççĕ. Вĕсем радиофестивалъре, смотрсенче çĕршерĕн тухса хăйсен пултарулăхне кăтартса пачĕç. Художĕствăлă пултарулăх кружокĕсене йертсе пыма кадрсем хатĕрлес майпа республикăри халăх пултарулăх çурчĕ çак икĕ çул хушшинче 5 хутчен курссем туса ирттернĕ. Вĕсенче 88 çын вĕренсе тухнă. Кун пек курссене татах та туса ирттерме палăртнă.

Вырăнсенчи художĕствăлă пултарулăх кружокĕсенче палăрнă çынсем хăйсен пĕлĕвне ÿстерсе чылай малала кайрĕç. Вуншар çын колхоз театрĕсене ĕçлеме кĕнĕ. Театр, музыкă училишчисенче сахал мар çын вĕренет. Колхозри драмкружокран тухнă А. Терентйевă йулташ Чăвашсен академи театрĕнче артисткă пулса ĕçлет. Халăх творчĕстви çуртĕнче те колхозри кружоксенчен тухнă çынсем инструктăрсем пулса ĕçлеççĕ.

Пирĕн çĕршывра халăх творчĕствине ÿстерсе чечеклентерсе пыма пур майсем те çителĕклĕ. Художĕствăлă пултарулăх кружокĕсене йертсе пырас ĕçе аванлатни кăна кирлĕ.

Н. Амурцĕв.

Халăх творчĕстви çурчĕн инструктăрĕ.

Браксем пулаççĕ

Куславкка комбиначĕ плана тултарас тĕлĕшпе халĕ те йапăх ĕçлесе пырать. Простой, брак пулни чакмасть. Хăшпĕр чухне типĕтекен цех пĕтĕм продукци хисепĕнчен çуррине брак кăларать. Акă, нойаберĕн 22—23-мĕшĕсенче вăл каскалакан цеха виçĕ вакун типсе çитмен материалсем панă.

Хăма çуракан цех та час-часах брак тăвать (нойабĕрĕн 25-мĕшĕнче 26 кубла метр йăвăç виçесĕр çурса кăларнă т. ыт. те). Цех начальникĕ В. Новикăв йулташ продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн тăрăшни курăнмасть. Цех час-часах брак кăларать пулин те Новикăв рабочисемпе канашлусем, калаçусем туса çÿтсе-йавмасть.

Цехсем йеркелĕ ĕçлеменни çинчен комбинат директăрĕ Никитин йулташ лайăх пĕлсе тăрать, ун патне простойсем, браксем пулни çинчен актсем те час-часах пырса выртаççĕ. Çапах улшăнусем çук.

Г. Кузнецов.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Гриншпун скулъптăр тунă „Парашÿтист" скулъптура.

(„Пресс-клише").

Ертелти стахановĕцсем

Шупашкарти „Кожупряжь" ертелти чувйаксем çĕлекен бригадă кашни уйахрах хăйĕн производствă заданине ирттерсе тултарса пырать. Иртнĕ уйахра вăл урана тăхăнмалисем 1157 мăшăр çĕлесе плана 187 процент тултарнă. Çакă ĕнтĕ вăл членсем хушшинче социалисăмлă ăмăрту саралса пынине кăтартать. Ку тĕлĕшпе бригадир А. Карабайĕв йулташ уйрăмăнах тăрăшса ĕçлет.

Ертелте ĕçре пиçнĕ çĕнĕ çынсем—стахановĕцсем татах та пур. Акă нумайах та пулмасть Хĕрлĕ Çартан таврăннă Борисăв йулташ часах производствă йĕркине вĕренсе çитрĕ, халĕ нормăна 176—180 процент тултарать, тавар пахалăхĕ лайăх.

Ремонтор М. Алексейĕв йулташ та ĕçре пысăк тухăçлăхпа ĕçлет, хăйĕн лайăх опытне ытти рабочисем хушшине сарать.

— Епĕ 62-мĕш çула кайрăм. Анчах ватлăха туймастăп. Ĕçлес хастарлăх çав тери пысăк. Ыра пурнăçшăн савăнса ĕçлетĕп, — тет Алексейĕв йулташ хĕпĕртенипе.

И. Б.

„Учитĕл" спорт обшчĕствин ĕçĕсем

Йетĕрнери педучилишчăра „Учитĕл" спорт обшчĕстви ĕçлеме тытăннăранпа пĕр çулталăк иртрĕ. Халъ вăл обшчĕствăн 140 член шутланать.

Обшчĕствă çумĕнче тĕрлĕ çекцисем ĕçлеççĕ. Акă шашкăпа шахмăт çекцийĕ октябĕр—нойабĕр уйăхĕсенче шашкă турнирĕ туса ирттерчĕ. Вăл турнира 20 çын хутшăнчĕ. Декабĕр уйăхĕнче шахмăт турнирĕ пулать. Нойабĕрĕн 23—29-мĕшĕсем хушшинче училишчăри волейбол командисен ăмăртăвĕ пулса иртрĕ. Вăл ăмăртура арçынсен III-мĕш „ФКО" команди, хĕрарăмсен I-мĕш „ФКО" команди пĕрремĕш вырăн йышăнчĕç.

„Учитĕл" обшчĕстви хĕллехи сезона кĕтсе илме пикенсе хатĕрленнĕ май хоккей команди 5, йĕлтĕрçĕсен çекцийĕ арçынсенчен 2 командă, хĕрарăмсенчен 2 командă организацилерĕ.

Конъкипе хоккей çекцине Ленинградри физкулътура институтĕнчен вĕренсе тухнă Королъов йулташ йертсе пырать. Йĕлтĕр çекцине çав институтранах вĕренсе тухса аслă тренер квалификацине илнĕ Лиголалин йулташ йертсе пырать.

И. Ижейĕв.

ПАРТИ ВĔРЕНТĔВĔН ÇУРТĔНЧЕ

ПСК(б)П Обкомĕн парти вĕрентĕвĕн çурчĕ ПСК(б)П Историне вĕрнне чухне илемлĕ литературăпа усă курасси çинчен лекцисем ирттерме тытăнчĕ.

Декабĕрĕн 10-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, пĕрремĕш лекци—М. Горький творчĕстви çинчен пулать.

* * *

ПСК(б)П Обкомĕн парти вĕрентĕвĕн çурчĕ декабĕрĕн 11-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи инженерсемпе техниксене валъçи „Отмена крепостного права и развитие капитализма в России" темăпа лекци иртерет. Лекци каçхине 7 сехетре пуçланать.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНАВ.

Йапонин хĕçпăшаллă вăйĕсем

(ЙУЛАШКИ)

хыççăн мар кайаççĕ, вĕсем «хăрушă шухăшсене» йерсе кайаççĕ. Моралъ тĕлĕшĕнчен Йапонин мĕнпур çарĕ пăсăлса кайнă тесе калама çук. Çапах та деморализаци процесĕ Йапони çарĕн нумай подразделенийĕсенче ÿссе пырать—çакна тĕнчери пĕтĕм пичет те йышăнать.

Йапони салтакĕсенчен пĕр пайĕ тÿррĕмĕнех йе тÿррĕмĕнех мар, активлăн йе паççивлăн, анчах пурпĕрех вăрçа хирĕç протеслет. Ун çинчен чаççенчи хĕçпăшаллă восстанисем, фронтран тарса тухнисем, офицерсем хушнисене пурнăçа кĕртменни, нумай салтаксем хăйсене-хăйсем вĕлерни тата ытти те тĕплĕн кăтартса параççĕ. Йапони командованийĕ «ывăнса çитнĕ» тесе пиншер салтаксене фронтран кайала таварать. Анчах «ывăнса çитнисен» шутне çапăçусенче хăшкăлса çитнĕ салтаксем мар, çăмăл аманнисем те мар, вăрçăва килĕшмен салтаксем кĕреççĕ. Çак çулти çуллахине çавăн пек «ывăнса çитнисем» 70 пин çынна йахăн пулнă. Вăрçăнчи активлă противникĕсене Йапоние илсе çитерсен хупса лартаççĕ, вĕсенчен хăшне-пĕрне персе вĕлереççĕ.

Çаксем вĕсем пурте ак мĕн кăтартса параççĕ: Йапони салтакĕн ăнлануlăхĕ ÿарансах пырать.

* * *

Нумай çулсем хушши ĕнтĕ Йапони каçса кайсах тинĕс-çар флочĕ тăвать, вăл флот «Кăнтăр направленинче», урăхла каласан Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсен территорилĕ владенийĕсене, Англипе Францин Лăпкă океан бассейнчи владенийĕсене тытса илмешкĕн пулать.

Йапони Вашингтонрипе Лондонри логăвăрсем тăрăх кăтартса панă тинĕс-çар строителствин программине вĕçне çитиех тата ăна иртерсе тултарнă çĕршывсенчен пĕри пулса тăрать.

Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсен, Англин тата Йапонин тинĕс флочĕ 1938 çул пуçламăшĕ тĕлне мĕнле пулнине кăтартакан цифрăсем *)

	Линкорсем	„А" крейсĕрсем	„Б" крейсĕрсем	Есминĕцсем	шыв айĕнче çÿрекен кимĕсем	Авианосĕцсем
Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсем	15	17	—	35	22	3
Англи	15	15	19	88	39	6
Йапони	10	12	8	76	41	5
Франци	6	7	—	67	76	1
Итали	4	7	3	72	73	—

Таблицăран (кунта халъхи вăхăтра пур карапсене кăна кĕртнĕ) курăнать: флот йенĕпе Йапони тĕнчере пĕрремĕш вырăнсенчен пĕринче тăрать. Калас пулать, çÿлте асăннă карапсемсĕр пуçне, Йапони тинĕс-çар строителствине вăрттăн майпа туса пырать. Америкă хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, линкорсен хисепĕпе вăл Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсемпе Англине хуса çитнĕ. Йапонин калама çук пысăк хĕçпăшаллă вăйсем пурри Лондăнпа Вашингтона пысăккăн пăшăрхантарать, мĕншĕн тесен Йапони хăйĕн нумай хисеплĕ тинĕс флотне йулашкинчен Лăпкă океан çинче пуç пулас майпа хайар тытăçура Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсене, Англине тата Францине хирĕç [illegible]ратать.

А. Рамин.

*) «Арми энд Нейви Регистер» 1938 çулти февралĕн 5-мĕшĕнче кăтартнă цифрăсем тăрăх.

Чăвашрадиокомитет РВ—74 станци урлă декабĕр уйăхĕн иккĕмĕш вунăкунлăхĕнче паракан паллă передачăсен ПРОГРАММИ

(Мускав вăхăчĕпе)

11.XII. 16.00—16.28—Уйав йачĕпе паракан концерт. 17.00—17.28—Ачасен передачи. Тăван çĕршыв çинчен сăвăсемпе йурăсем.

12.XII.—18.15—18.43—Уйав йачĕпе паракан литература передачи. 18.45—19.30—Концерт. Кĕçĕн Маклашкинăри (Сĕнтĕрвăрри р.) колхоз хорĕ пулать.

13.XII.—16.00—16.28—Концерт. Вырăс халăх йуррисем. 17.00—17.28—Ачасен передачи. Чаплă композитăр Бетховĕн пурнăçĕпе творчĕстви. 20.30—20.58—Литература передачи. Генрих Гейне пурнăçĕпе творчĕстви.

14.XII.—16.00—16.28—Концерт. Чăваш музыки.

15.XII—16.00—16.28—Концерт. Чайковски, Даргомыжски тата Римский-Корсаков композитăрсен произведенийĕсем. 17.00—17.28—Ачасен передачи. Ишлейри вăтам шкулта вĕренекенсен художĕствăлă пултарулăхĕ.

16.XII—16.00—16.28—Концерт. Оборонă музыки (госхор йурласа парать) 20.00—21.58—Литература передачи. Революцилĕ Испани. 22.00—22.58—Бетховĕн творчĕствине хисеплесе паракан концерт (госфилармони çимфонилĕ оркестрĕ пулать).

17.XII—16.00—16.28—Концерт. СССР халăхсен йуррисемпе ташшисем. 17.00—17.28—Ачасен передачи. Хасан геройĕсем çинчен каласа пани.

18.XII.—18.15—18.43—Литература передачи. Пирĕн орденоносĕцсем. 18.45—19.30—Çĕмĕрле хулин художĕствăлă пултарулăхĕ.

19.XII.—17.00—17.28—Ачасен передачи. Сталин йулташăн ача чухнехи пурнăçĕ. 20.30—20.58—Литература передачи. Чăваш поечĕсем Аслă Сталин çинчен хунă сăвăсем.

Агитаципе пропагандă çектăрĕн передачинче (ултă кунлăхăн пилĕкмĕш тата улттăмĕш кунĕсемсĕр пуçне) кашни куллен 19.30—19.58 вăхăтра «ПСК(б)П Историн Кĕске курсĕ» малалине вуласа параççĕ.

«Йулашки хыпарсен кăларăмĕсем» кашни кунсемсĕр пуçне куллен 7.25, 15.30, 16.30, 18.15 пуçланаççĕ.

Чăвашрадиокомитет.

Мĕнпур колхозниксене, колхозсене, рабочисемпе служăшчисене, клубсене, вулав çурчĕсене, радиоузĕлсене тата спорт организацисене пĕлсе тăма

Чăвашсойузĕн Канаш хулинчи кулътурă таварĕсен бази çакăн пек таварсем мĕн чухлĕ кирлĕ таран сутать:

1) Електрофонсем—штукĕ 180 тенкĕ;
2) Домра оркестрĕ—комплект 1120 тенкĕ, комплектра тăвата струнлă домрăсем 13 штук;
3) Проекцилĕ хунарсем—штукĕ 90 тенкĕ;
4) Балалайкăсем;
5) Мандолинăсем—штукĕ 50 тенкĕрен пуçласа 100 тенке çитиччен;
6) Йолкă капăрлатмалисем;
7) Çулпуçсен бÿстсем;
8) Анодлă батарей—45 волът,
9) Анодлă батарей (шыв тултармали)—50 волът;
10) Елементсем—1,35—500;
11) Радиолампăсем (тĕрлĕренех);
12) Пысăк биллиардсем—штукĕ 700 тенкĕ, шăмăран тунă шарсем;
13) Биллиардсем—штукĕ 125 тенкĕ;
14) Йĕлтĕрсем—тĕслĕрен суртлă;
15) Конъкисем—тĕслĕрен суртлă;
16) Хĕвелтухăç полушарин физикăлă карттисем,
17) Хĕвеланăç полушарин физикăлă карттисем;
18) Йевропăн физикăлă картти;
19) Азин физикăлă картти;
20) Кăнтăр Америкăн физикăлă картти;
21) Австралин физикăлă картти;
22) ССР Сойузĕн политикăлă картти;
23) Йалхуçалăх тата ача-пăча литературисем (чăвашла).

Мĕнпур районсенчи кулътмагсенчен, йалти магазинсенчен тата йалпосенчен ыйтăр.

3—3. ДИРЕКЦИ.

Шупашкарти кăлбаси маçтерскойне БУХГАЛТĔР васкавлă кирлĕ

АДРЕС: Коммунальная слобода, 24, колбасная мастерская.

Чăваш Аптекоуправленин Канашри тĕп аптекă складне йаланлăхах ĕçлеме кирлĕ: çекретар-машинисткă, калькулятăр-счетовод, сторăж-охранник, фасофшчиксем

АДРЕС. г. Канаш, Базарная площадь, контора склада. Телефон № 66.

2—1 Администраци.

ЧĂВАШ АССР СЫВЛĂХА СЫХЛАВ ХАЛĂХ КОМИССАРИАЧĔ ДЕЗИНФЕКТĂРСЕН ВИÇĔ УЙĂХЛĂХ КУРСНЕ ОРГАНИЗАЦИЛЕТ

Занятисем çак çулти декабĕрĕн 19-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Курса арçынсемпе хĕрарăмсене те, 6 çултан сахал мар вĕренкисене, район тата хула сывлăх пайĕсен командировкисем тăрăх çеç илеççĕ. Курсантсене стипендипе хватер укçи 90 тенкĕ параççĕ.

Зайавленисене ЧАССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн медицинă образовани пайне памала.

3—2

ЧĂВАШСТРОЙТРЕСТĂН СНАБЖЕНИ ПАЙĔ

краскăсем, тимĕр, тимĕр-таварсем, фарфăртан тунă шултра роликсем, хулăм тата пĕчĕк виçелĕ кантăк, тарă СУТАТЬ

Адрес: Ленинградская, 28.

Кашни кунах кăнтăрла 12 сехетрен пуçласа ыйтса пĕлме пулать.

5—5

Чăваш АССР Апат-çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕн ПУЛĂ ХУÇАЛĂХНЕ аслă бухгалтĕр заместителĕ, çекретар-машинисткă КИРЛĔ.

Аслă бухгалтĕртан Соловйовран çак адрĕспе ыйтса пĕлмеле: г. Чебоксары, ул. Ленинградская, 16.

Чăвашсойузăн Канаш хулинчи базине ЙАЛАНЛĂХА кантурта ĕçлеме 3 бухгалтĕр, çекретар-машинисткă, складра ĕçлеме 3 счетовод тата таварсемпе ĕçлекен КИРЛĔ

Ĕçукçи—государствă норминовапийĕ тăрăх. Ĕç вăхăтĕнче ыйтса пĕлмеле.

„СОЙУЗКИНОПРОКАТĂН" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКĔНЧИ УЙРĂМĔ

„МИТЬКА ЛЕЛЮК"

ЙАТЛА САСЛĂ, ХУДОЖĔСТВĂЛĂ ÇĔНĔ ФИЛЪМ ИЛНĔ. ĂНА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКĔНЧИ ЕКРАНСЕМ ÇИНЕ КĂЛАРАТЬ

Пĕрремĕш Комсомолъски Киностуди производстви, 1938 çул.

Сценари автăрĕсем А. Головко, Н. Шпорько. Режиççорсем А. Маслюков, М. Мамайевскайа. Оператăр Е. Славинский. Композитăр Й. Милютин. Йурă сăмахĕсене поет-орденоносĕц В. Лебедĕв-Кумач çырнă. Художник Н. Валерйанăв. Художник-декоратăр С. Худяков. Звукооператор А. Лупал Монтаж ĕçĕнчи ассистент А. Бронфман. Оператăр ассистенчĕ Н. Кирсанăвă. Филъм директăрĕ Г. Лугвенĕв.

Исполнителсем: Митькă—Леня Фесечко. Стасик—Едик Бойарчук. Сережă—Леке Гитлин. Васильо—Витя Коновалăв. Командир—И. Кононенко. Пулеметчик Мороз—Е. Пономаренко. Дед Мороз—А. Крамаренко. Учителницă—М. Маркăвă. Тимрĕç—М. Горнатко. Тимрĕç арăмĕ—республикăн тава тивĕçлĕ артисĕ Н. Ужвий. Тимрĕç хĕрĕ Олянкă—Нина Великайа. Полъшă полковникĕ—Н. Братерский. Штаб начальникĕ—Д. Кадникăв. Помешчик—республикăн тава тивĕçлĕ артисĕ А. Дорошевич. Бубырь республикăн тава тивĕçлĕ артисĕ И. Майак. Имени управляйушчийĕ—А. Малъский. Петлюрă сотникĕ—В. Поддубный.

Филъм теми—граждăн вăрçин çулĕсенче, Совет Украинине ирĕке кăларассишĕн шурполяк-интервентсемпе белогвардейĕцсене хирĕç кĕрешнĕ чухне совет ачисем паттăр, шиксĕр тата хăйулă пулни.

„Митька Лелюк" филъма декабĕрĕн 13-мĕшĕнчен пуçласа кашни кунах Улатăрти „АРС" кинотеатрта кăтартаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 581 Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 880, 58×84 п. л: